чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

20 /26426/№ Ытлари кун, 2014, нарăс (февраль), 4 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Пенси тытăмĕ çĕнелет

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тунти кун ĕç тăвакан влаç органĕсен, федерацин территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева пенси тытăмĕнчи çĕнĕлĕхсемпе паллаштарнă. Халĕ пенси страховани пайĕнчен тата пухăнса пыракан пайран тăрать. 2015 çултан страховани пенсийĕ тата пухăнса пыракан пенси уйрăм пулаççĕ, 2025 çулччен – куçăм тапхăрĕ. Страховани стажне социаллă пĕлтерĕшлĕ тапхăрсем те кĕрĕç: призывпа çарта пулни, 1,5 çул тултариччен ачана, инвалид ачана, I ушкăн инвалидне, 80 çултан аслăрах ватă çынна пăхни.

Ача пăхмалли отпусксен тапхăрĕсемшĕн /кашни ача 1,5 çул тултариччен/ шутласа палăртакан коэффициент ачасен шутĕнчен тӳрремĕнех килĕ: иккĕмĕш ачашăн – 2, виççĕмĕшпе тăваттăмĕшшĕн – 3 хут пысăкрах. Страховани стажĕнче 1,5 çулчченхи ачасене пăхнă тапхăрсене пĕтĕмпе 6 çул таран шута илме пултараççĕ.

Пуçласа çак нормăна та кĕртнĕ: ытларах çул ĕçлесе тата пенси çулне çитнĕ хыççăнхинчен каярах пенси пама ыйтса пенси виçине ӳстерессине хавхалантараççĕ. Пенсие каярах ыйтнин кашни çулталăкĕшĕн страховани пенсине тивĕçлĕ преми коэффициенчĕ чухлĕ пысăклатĕç. Çавăн пекех саккунра ĕçлемен, ял хуçалăхĕнчи стаж 30 çултан кая мар гражданселе вĕсем ялта пурăннă чухне паракан çирĕп тӳлеве 25% ӳстерессине палăртнă.

Ĕçлевĕн «вăрттăн» рынокне легализацилес тĕллевпе 2014 çултан тытăнса Ĕçлев кодексĕ чăннипе ĕçлекенпе ĕç паракан хушшинчи ĕç хутшăнăвĕсене йĕркелекен граждан-право килĕшĕвĕсем тума чарать. Р.Кондратьева каланă тăрăх – виçĕ шайлă /çухатнă ĕç укçин 40% кая мар упраса хăваракан патшалăх пенсийĕ, корпораци тӳлекенни тата çынсем хăйсен ирĕкĕпе хываканни/ пенси тытăмне аталантармалли нормăпа право никĕсĕ хатĕр.

М.Игнатьев пенси тытăмĕнчи улшăнусем çынсене ача çуратма хавхалантарнине, нумай ачаллă çемьесене тĕревленине, ял хуçалăх ĕçченĕсен интересĕсене хӳтĕленине палăртнă, ку енĕпе ăнлантару ĕçне анлăн пурнăçлама сĕннĕ.

Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин 2013 çулта патшалăх тата муниципалитетсен саккасĕсене вырнаçтарнин кăтартăвĕсемпе паллаштарнă. Унăн шухăшĕпе – контракт тытăмĕ çинчен калакан саккун муниципалитетсен шайĕнче йĕркелекен суту-илӳ пахалăхне тивĕçтерме май парать.

Тариф службин ертӳçи Альбина Егорова «Сутăн илессин уççăнлăхĕн наци рейтингĕ-2013» проект кăтартăвĕсем тăрăх Чăваш Ене уççăнлăхăн пысăк рейтингне пани çинчен пĕлтернĕ. Республика Раççейре – 19-мĕш, округра 1-мĕш вырăн йышăннă. Пĕлтĕр çак рейтингра аяларах пулнă.

Суту-илӳ конкуренцийĕн шайĕпе Чăваш Ен Раççейри вăтам кăтартусенчен чылай ирттерет. Апла пулин те республика Пуçлăхĕ аукционсенче шанчăксăр подрядчиксем çĕнтернĕ тĕслĕхсене аса илтернĕ, çакă ĕççене вăхăтра пурнăçлама чăрмантарнă. Вăл çавăн пекех тепĕр чухне суту-илĕве хутшăнакансем каварлашни, çакă вĕсене хаксене хăйсене кирлĕ пек палăртма май пани пирки асăрхаттарнă. Çӳлерех асăннă саккун саккассене вырнаçтарассин тухăçлăхне ӳстерме, аукционсене уççăн йĕркелеме пулăшасси çинчен каланă.

Канашлура çавăн пекех «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ-2014» чупу кăтартăвĕсене, Чăваш Ен Сочири Олимп тата Паралимп вăйăсене хутшăнассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

Шупашкарта – роуд-шоу

Нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарта технологи предпринимательлĕхне аталантарас тата пулăшас енĕпе ĕçлекен Пĕтĕм Раççейри программăн иккĕмĕш тапхăрĕ иртет. Ку тĕл пулăва Russian StartUp Tour аталану институчĕсен роуд-шоу мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелеççĕ.

Çав кун Раççейĕн инноваци тата венчур инвестицийĕсен рынокĕн паллă эксперчĕсем Чăваш Республикинчи инноваци проекчĕсен авторĕсемпе тĕл пулаççĕ. Шупашкарти мероприятие "Сколково" фондăн президенчĕн канашçи Пекка Вильякайнен тата федерацин Çамрăксен ĕçĕсен агентствин ертӳçин çумĕ Юрий Сапрыкин уçаççĕ. Палăртни вырăнлă: Russian StartUp Tour роуд-шоу 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 27-мĕшĕччен Раççейĕн 28 хулинче – Владивостокран пуçласа Калининград таран – иртет. Унăн тĕп тĕллевĕ – пысăк технологи рынокĕнче кирлĕ инноваци проекчĕсене тупасси, регионсенчи предпринимательлĕх аталанăвне хавхалантарасси, çамрăксене хăйсен проекчĕсене пурнăçа кĕртмелли стратегисене хатĕрлемешкĕн пулăшасси, предприниматель пĕрлĕхĕсене тата ăнăçлă стартап-командăсене йĕркелеме пуçласси.

И.БЕЛОВА.

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун тăххăрмĕш сессине пухасси çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун тăххăрмĕш сессине 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Правительство çурчĕн Ларусен пысăк залĕнче пухас.

10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Ю.ПОПОВ.

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун тăххăрмĕш сессийĕн кун йĕркин проекчĕ

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ вун тăххăрмĕш сессийĕнче 10 ытла ыйту пăхса тухма палăртаççĕ, çав шутра:

1. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Граждансен уйрăм категорийĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемшĕн тӳлес енĕпе социаллă пулăшупа тивĕçтермелли мерăсем çинчен» саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

2. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен» саккунĕн 1 тата 2 статйисене улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

3. Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕ тата Чăваш Республикин патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр надзорĕн органĕ муниципалитетăн пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕн органĕсемпе çыхăнса ĕçлесси çинчен» саккунĕн 3 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунĕн проекчĕ çинчен.

4. Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи Шалти ĕçсен министерствин 2013 çулхи ĕç-хĕлĕн отчечĕ çинчен.

Малалла, Сочири çĕнтерӳçем патне!

Çапларах чĕнӳпе иртрĕ нарăсăн 2-мĕшĕнче Олимп вăйăсене халаллана «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăрту. ЧР Физкультурăпа спорт министерстви пĕлтернĕ тăрăх – пирĕн республикăра мĕн пур район-хулара йĕркеленĕ спорт уявне 49 пин çын хутшăннă

● *Олимп вăйăсен чемпионĕ Владимир Воронков: «Старт!»*

Тĕп ăмăрту «Шупашкар: 500 çул» культурăпа кану паркĕнче иртрĕ. Йĕлтĕрçĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ. «Сывă ӳтре – сывă чун», – теççĕ. Çавăнпа Чăваш Енре пурăнакан кашни çын спортпа туслă пултăр. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан ĕçре те, вĕренӳре те хастар, пур йывăрлăха та çĕнтерме пултарать. Йĕлтĕрпе ярăнасси ялахах спортăн хĕллехи тĕп тĕсĕ шутланнă. Вăл çултан-çул вăй илсе пырать. Акă паянхи ăмăрту та пин-пин çынна спорт уявне пухрĕ», – палăртрĕ Михаил Васильевич. Савăнăçлă церемонире Олимп талисманĕн авторĕ Сильвия Петрова хутшăнчĕ, Тăвай хĕрне республика Пуçлăхĕ Сочие каймалли билетсем пачĕ. Ăмăртăвăн тĕп судйи, Олимп вăйăсен чемпионĕ Владимир Воронков та пурне те ăнăçу сунчĕ. «Паянхи ăмăрту пирĕн спортсменсене Олимпиадăра пысăк çитĕнӳçем тума хавхалантартăр. Сирĕн хушăра та Олимп паттăрĕ çитĕнессе шанатăп», – терĕ вăл ăмăрту пуçланнине пĕлтерсе.

Чи малтан старта пĕчĕккисем тухрĕç. Вĕсем 500 метрлă дистанцие парăнтарчĕç. Ку тупăшура Шупашкарти 178-мĕш садике çӳрекен Полина Яковлевăпа Володя Никифоров пуринчен маттуртарах пулчĕç. Вĕсем хыççăн VIP-чупу иртрĕ. Унта министрсем, депутатсем, предприяти-организаци ертӳçисем, паллă спортсменсем хутшăнчĕç. 18 çула çитмен хĕрсемпе каччăсем 3 километр чупрĕç. Иртнĕ çулхи пекех çак ушкăнсенче чи пысăк парнесене Шупашкарти 59-мĕш шкулта вĕренекен Кристина Кусковăпа 39-мĕш шкулта ăс пухакан Алексей Николаев тивĕçрĕç. Арçынсен хушшинче /вĕсем яланхи пекех 10 километр чупрĕç/ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕ Станислав Григорьев çĕнтерчĕ, хĕрарăмсен ушкăнĕнче пултаруллă çамрăк спортсменкăна Анастасия Гришинăна никам та хуса çитеймерĕ.

Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнчен хастар кинемей-мучи те юлмарĕ, пĕрремĕш хут йĕлтĕр çине тăнă шăпăрлансем те сивĕрен хăрамарĕç. Акă «Чи çамрăк йĕлтĕрçĕ» ята икĕ çулти Андрей Смирнов тата 4-ри Василиса Васильева тивĕçрĕç. Чи аслисем – 80 çултан иртнĕ Миранда Кольцовăпа Леонид Никифоров. Ăмăртăва кашни çул чăваш наци тумĕпе тухакан 81-ри Вера Орловăна та уйрăм парнепе хавхалантарчĕç.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

Чăваш Ен Пуçлăхĕ видеоконференци ирттернĕ

Нарăсăн 1-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ ертсе пынипе видеоконференци режимĕнче муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсен пуçлăхĕсемпе канашлу иртнĕ.

ЧР строительство министрĕ Олег Марков районсемпе хуласен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕсем хутса ăшăтмалли тапхăрта мĕнле ĕçлени, энергоресурссемшĕн пухăнса кайнă парăмсем çинчен пĕлтернĕ.

Хутса ăшăтмалли тапхăр пуçланнăранпа республикăн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ тата топливăпа энергетика комплексĕн предприятийĕсем пĕр тикĕс ĕçлеççĕ. Çак тапхăрта авариллĕ 24 лару-тăрăва шута илнĕ. Çынсен пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратакан пысăк аварисем пулман. Авари-диспетчер службисем талăкĕпех ĕçлеççĕ, коммуналлă котельнăйсене, пысăк категориллĕ объектсене энергин резерв çăл куçĕсемпе тивĕçтернĕ.

Усă курнă энергишĕн парăма татас ыйтупа çине тăрсах ĕçлеççĕ. 2014 çулхи кăрлачăн 24-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсен парăмĕ 2334 млн тенкĕпе танлашнă. Комсомольски тата Муркаш районĕсен администрацийĕсем çут çанталăк газĕшĕн туллин тӳлесе татнă, Куславкка, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсен, Улатăрпа Çĕмĕрле хулисен администрацийĕсен çут çанталăк газĕшĕн парăмсем раштав уйăхĕнче шутласа панинчен 2 хут пысăкрах. Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри районĕсен, Улатăрпа Çĕмĕрле хулисен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх организацийĕсем электроэнергишĕн тӳлес енĕпе парăма кĕнĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ районсен ертӳçисене итленĕ, халăх пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн йĕркеллĕ тӳлесе пынă чухне районта парăмсем ӳсмелле маррине каланă. Çакнашкал лару-тăру ан пултăр тесен управляющи компанисен ĕçне çирĕп тĕрĕслемелле. Уйрăммăн илсен халăх ӳпкелешнипе Шупашкар районĕнчи Ишлей салинчи «Уют» управляющи компанин ĕç-хĕлне тĕрĕслеме хушнă.

О.Марков министр 2012-2013 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă, ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» программăна туллин пурнăçланине пĕлтернĕ. 2013-2017 çулсенчи асăннă йышши программăпа килĕшӳллĕн 4979,6 млн тенкĕ уйăрма палăртнă.

2013 çултанпа республикăра çуртсене тĕпрен юсамалли тытăм йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Строительство министерстви нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсама вăрахлăх программа хатĕрлес енĕпе ĕçе вĕçленĕ. Унта нумай хваттерлĕ 4692 çурт /пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 15,9 млн тăв. метр/ кĕнĕ. Халăхпа сӳтсе явнă хыççăн программăна нарăс уйăхĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче пăхса тухĕç.

«Ростелеком» АУОн Чăваш Енри филиалĕн директорĕ Сергей Иванов районсенче пысăк хăвăртлăхлă Интернет вырнаçтарасси, унпа усă курасси çинчен каласа панă. ЧР Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службине, хула тата район администрацийĕсемпе, ЧР Граждан обороне тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕпе пĕрле пысăк проектсене пурнăçа кĕртеççĕ.

Республика Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх – халăха паха çыхăнупа тивĕçтересси ЧР Информаци политикин министерствин ĕçĕнче тĕп вырăнта. Палăртнă тĕллевсене пурнăçлама мĕн пур резервпа усă курмалла, пысăк провайдерсемпе çыхăну тытмалла, федераци программисене хутшăнмалла.

Юлашкинчен Михаил Игнатьев пуçлăхсене муниципалитетсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх вырăна тухса ирттерекен канашлусен графикĕнчи улшăнусем çинчен пĕлтернĕ, район администрацийĕсен пуçлăхĕсене çакнашкал канашлусенче аталану малашлăхне палăртма, çĕнĕ проектсемпе ĕçлеме сĕннĕ.

■ **А.ЛЬВОВА**

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Конкурса пĕтĕмлетнĕ

Куславкка районĕнче хушма пĕлӳ паракан педагогсен «Ачасене чĕреме паратăп» конкурсне пĕтĕмлетнĕ. 2010 çултанпа иртекен конкурса 11 вĕрентекен хутшăннă.

Вĕсем жюрие эссе евĕр çырнă хайлавĕсемпе, вĕренӳ программисемпе тата ĕçре усă куракан меслетсемпе паллаштарнă. Çĕнтерӳçĕсене тăватă номинацире палăртнă. Ăста ӳнерçĕсен ушкăнĕнче Куславккари ача-пăча аталану центрĕн ĕçченĕ, «Ылтăн арча» кружокра ачасене ал ĕç ăсталăхне вĕрентекен Светлана Сидякова мала тухнă. Унăн ĕçтешĕ, «Телейлĕ ачалăх» пултарулăх пĕрлешĕвĕн ертӳçи Лариса Мотова «Культура» номинацире диплома тивĕçнĕ. Хулари ача-пăча центрĕн педагогне Ираида Ларионовăна вĕренекенĕсем туризмпа тавра пĕлӳ енĕпе хастар пулни конкурсра çĕнтерме пулăшнă. Тĕрлемес вăтам шкулĕн учителĕ Елена Васильева тата унăн çамрăк экологĕсем тăван тавралăх тасалăхĕшĕн чунне пама хатĕр.

Е.АНДРЕЕВ.

Çĕнĕ фестиваль

Тĕн юррисене аталантарас, çамрăксене культурăпа чĕмлĕх воспитанийĕ парас тĕллевпе Патăрьел районĕнчи Тăрăн ялĕнче «Ĕненӳ. Шанчăк. Юрату» пултарулăх ушкăнĕсен фестивалĕ пулнă.

Вăл асăннă ялти Çветтуй Николай чиркĕвĕн игуменĕ Серафим пилленипе иртнĕ. Ăна Патăрьелти 1-мĕш пĕлӳ çурчĕн математика вĕрентекенĕ, чиркӳ çумĕнчи вырсарни шкулĕн ертӳçи Лидия Илихметова пуçарăвĕпе йĕркеленĕ.

Асăннă фестиваль девизĕ – «Пурне те ырăлăх кӳмелле!» Мероприятие Тăрăн ял тăрăхĕн пуçлăхĕ К.Михеев уçнă, пурне те ăнăçу, çирĕп сывлăх суннă. Тăрăн, Аслă Арапуç ял тăрăхĕсенчи, Турханти вырсарни, Патăрьелти ачасен искусство тата 1-мĕш шкулти пултарулăх ушкăнĕсем, Кĕçĕн Патăрьелти методика центрĕ çумĕнчи «Мария» ансамбль юрри-кĕввине куракансем ăшшăн йышăннă. Тăрăнти Леонид Лялькинăн тĕн, ыр кăмăллăх пирки çырнă сăввисене уйрăмах тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Юлашкинчен пултарулăх ушкăнĕсен ертӳçисене парнесемпе чысланă, ачасемпе çамрăксене вара пылак çимĕç тивĕçнĕ.

А.ГРОМОВА.

Поэта сума суса

Кăçал Иван Ивник çуралнăранпа 100 çул çитет. Çавна май Вăрнар районĕнчи Туçи Мăрат шкулĕнче çав куна халалласа пысăк мероприяти ирттерме палăртаççĕ.

Халĕ вара чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Миронова ертсе пынипе ачасемпе çамрăксем Иван Ивник кĕнекисене вулаççĕ, ун çинчен çырнă материалсене пухаççĕ. Ку ĕçе Çавалкасси ялĕнчи вулавăш ĕçченĕсем те хутшăнаççĕ.

Иван Ивник сасси тăван литературăра иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенче илтĕнме тытăннă. Çырма вăл фельетонсемпе пĕчĕк калавсенчен пуçланă. Чи малтанхи хайлавĕсем «Капкăн» журналта пичетленнĕ.

Иван Николаевич 1914 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Вăрнар тăрăхĕнчи Çавалкасси ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Пулас сăвăç ялти шкултан вĕренсе тухнă, 1928-1931 çулсенче Шупашкарти педагогика техникумĕнче ăс пухнă. Çавăн чухнех чăвашсен паллă çыравçисемпе паллашса туслашнă. Вăл уйрăмах «Капкăн» журналпа тачă çыхăну тытнă.

Унăн чи паллă хайлавĕсем: «Павлик Морозов», «Киркка Иленĕ», «Чемей пăлхавĕ» поэмăсем тата «Телей çулĕ» сăвăлла юмах. Ивник А.Пушкин, М.Лермонтов, М.Горький, В.Маяковский, С.Есенин ĕçĕсене чăвашла куçарса пичетленĕ. Вăл чăваш литературинче ытларах лирика хайлавĕсемпе палăрнă.

Р.ИВАНОВА.

Пирĕннисем – чемпионсем

Пензăра сетокан енĕпе федерацин Атăлçи округĕн чемпионачĕ иртнĕ. Йăлана кĕнĕ ăмăртура кăçал 12 регионти 400 ытла каратист вăй виçнĕ. Унтан Чăваш Ен спортсменĕсем те пушă алăпа таврăнман.

Чемпионата Шупашкарти «Будокан» тата «Коршун» спорт клубĕсен воспитанникĕсем хутшăннă. Кумите енĕпе пĕлтĕрхи чемпион Александр Авакумов çĕнтернĕ. Çав ушкăнрах Владимир Кимпа Игорь Петров виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. Ăмăртура çамрăк каратистсене те ăнăçнă. Акă хулари 1-мĕш шкулта 2-мĕш класра вĕренекен Александр Максимов 8 çулти ачасен йышĕнче пухмача икĕ «ылтăнпа» пуянлатнă. Çавăн пекех хăйсен виçисенче Никита Беловощевпа Николай Головин тата ытти-сем мала тухнă. Хĕр ачасенчен 8-ти Рамиля Филиппова тата 13-ри Александра Зверева пьедестал çине хăпарнă. Пензăра пирĕн спортсменсем пурĕ 15 медаль çĕнсе илнĕ. Пысăк кăтартупа палăрнисем пуш уйăхĕнче Мускавра иртекен çĕр-шыв чемпионатне хутшăнĕç.

А.МИХАЙЛОВ.

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çăвать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 11, каçхине 13 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нӳрĕк 86 процент.

Кун тăршшĕ 8 сехет те 49 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 15, каçхине 22 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 757 мм, сывлăшри нӳрĕк 81 процент.

Кун тăршшĕ 8 сехет те 53 минут.

70 çулхи юбилейпе саламланă

Кăрлачăн 31-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Лента" АУОна – хамăр çĕр-шыври пир-авăр хăюсем кăларакан тĕп предприятие – йĕркеленĕренпе 70 çул çитнине халаллана савăнăçлă уява хутшăннă.

Акционерсен обществи 400 ытла тĕрлĕ япала кăларать, Раççейре пир-авăр хăюсен производствин рынокĕнчи пĕтĕмĕшле калăпăшăн тăваттăмĕш пайĕ унăн шутланать.

Республика Пуçлăхĕ "Лента" АУО сотрудникĕсемпе ветеранĕсене юбилей ячĕпе саламланă. Вăл акционерсен обществинче ĕç тухăçлăхĕ ÿснине, производствăна анлăлатнине, ĕç укçин шайĕ пысăкланнине палăртнă. "Паян туса кăларнă продукци пахалăхне, хакне шута илсен Раççей Федерацийĕн, Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕн тулашĕнче сутма май пур", – тенĕ Михаил Игнатьев.

"Лента" акционерсен обществин генеральнăй директорĕ Роза Иванова фабрика 70 çул тăршшĕнче улшăннине, çав вăхăтрах ырă йăлисене сыхласа хăварнине палăртнă. Республикăн влаç органĕсене вăл Чăваш Енре бизнес йĕркеленеме меллĕ условисем туса панăшăн тав тунă.

Михаил Игнатьев предприяти сотрудникĕсене наградăсем панă. Республика промышленноçĕн аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн "Лента" акционерсен обществине Чăваш Республикин Хисеп грамотипе чысланă.

■ **А.ВАСИЛЬЕВА**

Пурлăх

Патшалăх регистрацийĕ – нотариус урлă

Кăçалхи нарăсăн 1-мĕшĕнчен федерацин 2012 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче йышăннă 379-ФЗ № саккунĕ вăя кĕчĕ. Унпа куçми пурлăхпа çыхăннă правасен патшалăх регистрацийĕ çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртнĕ. Пурлăх хутшăнăвĕсемпе çыхăннă ыйтусем кашни çынна тенĕ пекех пырса тивеççĕ те – Федерацин патшалăх регистрацийĕн, кадастр тата картографи службин республикăри управленийĕн ертÿçи Екатерина КАРПЕЕВА тата ЧР Нотариус палатин президенчĕ Елизавета СОКОЛОВА журналистсемпе ятарласа курнăçса çĕнĕлĕхсем çинчен каласа пани чăннипех вырăнлă пулчĕ.

Е.Карпеева палăртнă тăрăх – çĕнĕ саккунпа килĕшÿллĕн куçми пурлăх суту-илĕвĕпе çыхăннă ĕçсемпе граждансем малашне тÿрремĕнех Росреестра кăна мар, çакна нотариус патĕнче çирĕплетме те пултараççĕ. Хваттер, çурт-йĕр сутнине-туяннине нотариус патĕнче çирĕплетнĕ май граждансем нотариуса куçми пурлăхăн харпăрлăх правине Росреестр органĕсенче регистрацилессине те шанма пултараççĕ.

Уйрăм çынсемшĕн çакă, паллах, чи малтанах документсене Росреестрта кĕске вăхăтра регистрацилессине меллĕ. Регистраци валли кирлĕ заявленисемпе документсене йышăннă хыççăн ĕçе пилĕк ĕç кунĕнче пурнăçлĕç. Танлаштарма: регистраци службине тÿрремĕнех кайсан çакăн валли вунă кун кирлĕ пулĕ. Урăхла каласан харпăрлăх правине васкавлăн регистрацилемелле чух – чăннипех меллĕ. Документсене Росреестр органĕсенче нотариус е унăн ĕçченĕ хăйсемех илме пултараççĕ – куçми пурлăх хуçине параççĕ.

Çапла вара нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса граждансем хăйсен куçми пурлăхне сутмалла, парнелемелле чухне, çавăн пекех çурт е хваттер туянсан Росреестр управленине те, нотариус патне те кайма пултараççĕ – хăйсен ирĕкĕ. Нотариус патне кайсан документсен право экспертизишĕн регистратор мар, нотариус яваплă пулĕ.

Çакна палăртни вырăнлă: нотариус хăй регистраци ĕçĕсене пурнăçламасть, документсен пуххине тĕрĕслесе ĕнентерет çеç. Регистраци ĕçне çав-çавах Росреестр кăна пурнăçлать. Харпăрлăх прави те шăпах унта регистрацилене хыççăн тин çуралать.

Е.Соколова татăклăн палăртрĕ: "Нотариус йышăннă документсен саккунлăхне тĕрĕслесе ĕнентерет. Вĕсене регистрацие нотариус е унăн ĕçченĕ парсан пурлăх хуçине патшалăх регистрацийĕн хатĕр свидетельствине парĕç". Паллах, нотариуссен ĕç хушăнать. Анчах çакă, Елизавета Ильинична шухăшĕпе, штатсене пысăклатмалли сăлтав пулмĕ. Нотариуссем ĕç хушăнассине малтанах пĕлсе тăнă – хатĕрленнĕ. Çав шутра – кирлĕ техника енĕпе те. Чăваш Енре паян 50 нотариус ĕçлет – ĕлкĕрме тивĕç.

Çавăнпа пĕрлех нотариуссен яваплăх шайĕ те ÿсет. Журналистсем ултав тĕслĕхĕсемпе кăсăкланчĕç: кама та пулин ултавçăсем хăратса-ирĕксĕрлесе пурлăхне суттараççĕ пулсан? Нотариус палатин президенчĕн ку енĕпе позицийĕ çирĕп: нотариуссем кашни тĕслĕхре çын хăйĕн куçми пурлăхне мĕншĕн сутнипе кăсăкланма тивĕç. Ирĕксĕрлемеççĕ-и – çак ыйту хуравне те пĕлмелле. Çапла тумашкăн сутаканăн çывăх çыннисен шухăш-кăмăлне пĕлни те ытлашши мар. Çын куçми пурлăхне хăйĕн ирĕкĕпе сутни е парнелени пирки иккĕленÿ çуралсан нотариуса документсене ĕнентерсе Росреестра парассине хирĕçлемешкĕн нимĕн те чăрмантармасть.

Çапах та ултавлă тĕслĕх пулсан? Елизавета Ильинична республикăра унашкаллисем час-часах пулманни çинчен каларĕ. Енчен те пулчĕ тĕк, вăл йăнăшнине суд урлă ĕнентерсе парсан куншăн нотариус хăйĕн пурлăхĕпе, укçи-тенкипе явап тытать. Çавна май йăнăшасран сыхланасси чи малтанах нотариуса хăйне кирлĕ.

Сăмах май, суту-илĕве нотариус урлă пурнăçламалли мел унччен те пулнă, анчах – ипотека килĕшĕвĕсем тăрăх кăна. Çак пулăшу ĕçĕпе усă курăкансем йышлах мар иккен, çавна май саккуна çĕнетни нотариуссен клиенчĕсен йышне ÿстересси куç кĕрет. Е.Соколова тепĕр саманта та асăнчĕ: çулталăк пуçламăшĕнчен нотариуссем чылай ĕçе электрон çыхăнăвĕн мелĕпе пурнăçлама тытăнмашкăн хатĕрленнĕ. Анчах саккун кăларакан ку çĕнĕлĕхе ĕçе кĕртессине каяраха хăварма йышăннă – кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен. Апла-и, капла-и – нотариуссем "электронкăна" алла илме пĕтĕмпех хатĕрмĕн. Çавăнпа та утă уйăхĕнчен ĕçе пуçăнмашкăн нимĕнле чăрмав та пулмĕ. Çакă та, паллах, нотариуссен пулăшу ĕçĕсен хăвăртлăхне ÿстересси иккĕленÿсĕр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Кун йĕркинче

Тĕпре – перекетпе тухăç

"Хыпар" ыйтăвĕсене республикăн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана ЕНИЛИНА хуравлать.

– Калаçава Чăваш Ен пурлăхĕпе еплерех усă курнинчен пуçлар мар-и?

– Унпа хуçаланасси патшалăх харпăрлăхĕн тытăмне республикăра пурăнакансене ытларах усă кÿмелли никĕс çине куçарнипе тачă çыхăннă, – терĕ Светлана Александровна. – Налук шутланман тупăш хыснана ытларах кĕтĕр тесе май килнĕ таран пурлăха коммерци çаврăнăшне яваçтаратпăр. Çак тĕллеве ăнăçлă пурнăçласси тÿрремĕнех пурлăха туллин тата пахалăхлă шута илнинчен килет. Министерство патшалăх харпăрлăхĕнчи объектсене шута илес тĕллевпе республика пурлăхĕн реестрне йĕркелет. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне унта куçман пурлăхăн 10,6 пин объектне кĕртрĕмĕр. 2008 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчипе танлаштарсан вăл 30% ытла хушăнчĕ.

Пурлăхпа ăнăçлă хуçаланнине çирĕплетекен кăтартусенчен пĕри – реестр пĕлтерĕшĕ ÿсни. Çулталăк пуçламăшĕ тĕлне ку ÿсĕм 98% танлашнă. Çак кăтарту 2008 çулхинчен икĕ хут ытла пысăкрах.

– Патшалăх учрежденийĕсене реформăлассипе паллаштармăр-и?

– Пурлăхпа тупăшлă усă курас тĕллевпе тата вĕсем май килнĕ таран ытларах усă кÿччĕр тесе ĕçе 2013 çулта çĕнĕлле йĕркелеме пуçларămăр. Пĕлтĕрхи раштавăн 31-мĕшĕ тĕлне патшалăхăн – 319, вăл йышра автономин – 68 /21,3%/, хыснан – 75 /23,5%/, бюджетăн 175 /55,2%/ учрежденийĕ шутланнă. Тăкак сахалрах курас, услам ытларах илес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕç пурнăçланă хыççăн иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕ тĕлне учрежденисем çулталăк кайлăхипе танлаштарсан 8,6% сахалланчĕç. Вĕсен тĕллевĕнче çынсене май килнĕ таран ытларах усă кÿресси тĕпре пулни учрежденисем кÿрекен пулăшу ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма, вĕсем пĕрпĕрне евĕрлесе пĕрешкел ĕç тăвассине пĕтерме, аталанусăр учрежденисене тытса тăма республика хыснинчен уйăракан укçапа ÿсĕм тăвассишĕн усă курма май пачĕ.

Çитес çулсенче реформăна малалла тăсăпăр. Раççей Президенчĕ В.Путин 2014-2016 çулсенчи бюджет политики çинчен калакан бюджет Çырăвĕнче ăна пурнăçа кĕртме чĕнсе каларĕ. Министерство ĕçхĕлĕнче патшалăх пурлăхĕпе тухăçлă хуçаланма май паракан йĕрке тăвасси ÿлĕм те пĕрремĕш вырăнта пулĕ.

– Налук шутланман тупăшпа хыснана пуянлатасси пирки мĕн пĕлтеретĕр?

– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев иртнĕ çул вĕçĕнче Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче Чăваш Ен хăй тĕллĕн укçа-тенкĕ ытларах туса илесси тĕп тĕллевсеннен пĕри пулнине палăртрĕ. Министерство ăна пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлет. Норматив-право акчĕсем çирĕплетнĕ. Вĕсем пурлăхпа çĕр лаптăкĕсене çынсемпе, юридици сăпачĕсемпе хаклашу ирттерсе пасар хакĕпе кăна алла памалли йĕркене уçăмлаççĕ. Вăй хуни сая каймарĕ: республика бюджетне 260 млн тенкĕлĕх хушма тупăш кĕчĕ. Пирĕн ĕмĕт – рынок мелĕпе анлăн усă курса Чăваш Ен тата муниципалитетсен хыснине укçа нумайрах хывасси.

Бюджетра вăл нумайрах пуçтарăнни пурлăхпа тухăçлă хуçаланнине аван çирĕплетет. 2011 çултан тытăнса хыснана çуллен кĕмĕл ытларах хыврăмăр. Пĕлтĕр муниципалитетсен тата республикăн пĕрлехи бюджетне харпăрлăхпа хуçаланса тата пурлăха алла парса 2,4 млрд тенкĕ – виçĕм çулхинчен 27% нумайрах – куçарнă. Çак укçаран Чăваш Ен хысninче пуçтарăнни – 1043,3 млн тенкĕ – 2012 çулхинчен 1,9 хут нумайрах. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен бюджетĕнче пухăнни – 1,4 млрд тенкĕ. Пурлăхран чи нумай нухрат куçарттарни – Шупашкар. Унăн тÿпи муниципалитетсен мĕн пур йышши тупăшĕн 57% чухлĕ. Паллах, хыснана хушма нухрат кĕрсен социаллă пурнăçа лайăхлатма, экономикăна аталантарма çăмăлрах.

– Харпăрлăхпа хуçаланса тата пурлăха алла парса хыснана хывнă укçан 54% – приватизацирен. Малаврахри çулсемпе танлаштарсан ку укçа нумайрах-и е сахалрах-и?

– Вăл 559,2 млн тенкĕпе танлашрĕ: 2012 çулхинчен 3,4 хут нумайрах пуçтарăнчĕ. Приватизаци юхăмне уççăн сарса, çынсенчен нимĕн те пытармасăр аукциона пурне те хутшăнма май туса парса пурлăхран укçа малтанхи хакран 60,2 млн тенкĕ ытларах пухрăмăр. Çакна министерство харпăрлăх правине çирĕплетес текенсене хаклашăва йышлăрах яваçтарнипе ăнлантаратпăр. Пурĕ 600-ĕн хутшăннă /кашни хаклашу пуçне 3,6 хутшăнакан/. Раççей Экономика аталанăвĕн министерстви пĕлтернĕ тăрăх – çĕр-шывра йĕркеленĕ кашни хаклашу пуçне вăтамран 1,06 хутшăнуçă çеç тивет.

– Çĕр çаврăнăшне хăвăртлатасси пирки калаçар-ха. Бизнес пуçласа ярас текенсем производство йĕркеленĕме ирĕккĕн лаптăк илме пултараççĕ-и?

– Ку ыйту хуравне республикăри пушă выртакан çĕр çинчен туллин информаци паракан ресурса кĕрсе тупма пулать. Иртнĕ çулхи раштавăн 31-мĕшĕ тĕлне унта 128 лаптăка /395 га/ хак панă: 56-шĕ /163 га/ тупăшпа перекетлĕн, ăна ытлашши тăкакламасăр усă куракансем валли çурт тума, 72-шĕ /232 га/ промышленноç паркĕ, технопарк, бизнес инкубаторĕ, производствăн ытти объектне тăвас тĕллевпе инвестици хывма.

Республика Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне янă Çырура пушă выртакан тата тухăçсăр усă куракан лаптăксен реестрне тумаллине уççăн палăртрĕ. Çум курăк хуплакан çĕре ик çулта пĕтĕмпех шута илме, ăна ĕç пуçаракансене уйăрмашкăн хатĕр пулма хушрĕ. Уссăр выртакан лаптăксем çинчен вырăнтан çынсем министерствăна пĕлтерессе шанатпăр. Юхăнса выртаканнине çĕр çаврăнăшне кĕртсен хыснан тупăш пайне пысăклатăпăр.

– Нумай ачаллă çемьесене лаптăкпа тивĕçтересси мĕнле пурнăçланать?

– Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çĕр тÿлевсĕр илекенсен черетне 3990 çемьене тăратнă. Çав шутран 1822-не панă ĕнтĕ. Вĕсен аллинче – 221,7 гектар. Ыйтăва Улатăрпа Канаш районĕсенче туллин татса пачĕç. Куславкка, Комсомольски, Пăрачкав, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне районĕсенчи, Улатăр хулинчи çемьесен 75% лаптăклă ĕнтĕ. Шел те, Канаш, Çĕмĕрле, Çĕнĕ Шупашкар хулисенче пурăнакансен 25% те илеймен. Нумай ачаллă çемьесем валли çĕр районсенче пайтах, хуласенче – çитмест. Çивĕч ыйтăва районсен çĕрне хуласене парса татса параççĕ.

– Пай çĕрне федерацин тивĕçлĕ органĕнче шута илтерессипе мĕнле улшăну пур?

– Республикăн çĕр фончĕн 55% – ял хуçалăх пĕлтерĕшли /1009,9 пин га/. Çакăнтан 543,4 пин га – пайсем. 2002 çулта "Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр çаврăнăшĕ" саккуна пурнăçлама тытăннăранпа 2011 çулхи кăрлач уйăхĕччен пĕрлехи харпăрлăхри ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ лаптăксен харпăрлăх правине 136,9 пин га тĕлĕшпе çирĕплетнĕ. Ку – пайсен 25%. 2011 çултан тытăнса вĕсене, çав шутра хуçисем ыйтман лаптăксене регистраци палати витĕр кăларас тĕллевпе пуçарнă ĕç вăй илсех пычĕ. Кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне 308,9 пин га /57%/ çĕрĕн харпăрлăх правине унта шута илтернĕ. Çапла вара иртнĕ виçĕ çулта 172 пин га /32%/ харпăрлăхçи тупăнчĕ. Паянхи куна республикăра хуçисем ыйтман çĕр 243,5 пин га /пайсен 45%/. 2011-2012 çулсенче çав лаптăксен пĕр пайне /19 пин га/ муниципалитетсен харпăрлăхне панă. Ку хуçисем ыйтман çĕрĕн 10% çеç. Унтанпа лару-тăрăва улăштартăмăр. Пĕлтĕр вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен харпăрлăх правине 43,7 пин га тĕлĕшпе – малаврахри икĕ çулта регистраци палати витĕр кăларнинчен икĕ хут пысăкрах – çирĕплетрĕç.

Республика Пуçлăхĕ Çырура: "Çĕр хăйне пăхнине юратать", – терĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчен виçĕ çулта çавнашкал лаптăксене пурне те харпăрлăха парассине йĕркелеме ыйтрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**
калаçнă

2014 çулхи нарăс уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Чăваш Республикинчи йышăну пÿлĕмĕнче граждансене йышăнмалли график

Орган ячĕ	Йышăну кунĕ	Йышăну вăхăчĕ
Атăл тăрăхĕнчи регионсен çут çанталăка сыхлакан прокуратурăн Шупашкарти районсен çут çанталăка сыхлакан пĕрлехи прокуратури	нарăс, 6	13.00-15.00
Федерацин сывлăх сыхлавĕн сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ	нарăс, 7	15.00-17.00
Федерацин монополипе кĕрешекен службин Чăваш Республикинчи управленийĕ	нарăс, 13	15.00-17.00
Чăваш Республикин прокуратури	нарăс, 14	15.00-17.00
Раççей Федерацийĕн Юстици министерствин Чăваш Республикинчи управленийĕ	нарăс, 20	15.00-17.00
Чул хула таможнин Чăваш Енри таможня посчĕ	нарăс, 27	13.00-15.00

Граждансене Шупашкар хулинче çак адреспа йышăнаççĕ: Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт.

Çак телефонпа шăнкăравласа малтанах çырăнмалла: /8352/ 62-22-33.

Коллеги

Çитменлĕхсене пĕтересшĕн

Çĕр-шыври аслă шкулсен 2012 çулхи эффективлăх мониторингĕн пĕрремĕш тапхăрĕн кăтартăвĕсемпе – Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчĕ тухăçлăх енчен тивĕçтерсе çитереймен вузсен шутне кĕнĕ. Мĕне тĕпе хурса хаклана-ха?

РФ Вĕренÿпе ăслăлăх министерстви çумĕнчи ведомствăсен хушшинчи комисси эффективлăх мониторингĕнче çак кăтартусене пахалать: вузăн вĕрентÿ тытăмĕнчи ĕçхĕлне, ют çĕр-шыв студенчĕсемпе ĕçленине, финанспа хуçалăх ĕç-хĕлне, вĕренсе тухакансене ĕçе вырнаçтарнине тата вĕренÿ учрежденийĕн инфратытăмĕ аталаннине. Вуз тухăçлисен шутĕнче пултăр тесен асăннă кăтартусенчен виççĕшне пурнăçламалла, пирĕн институтăн иккĕшĕпе çеç пурте йĕркеллĕмĕн.

Палăртса хăвармалла: çÿлерех асăннă комиссин эффективлăх мониторингĕ ирттерес тĕлĕшпе 2013 çулхи раштавăн 13-мĕшĕнче йĕркеленĕ ларăвĕнче /ăна Раççей вĕренÿ тата ăслăлăх министрĕ Д.В.Ливанов ертсе пынă/ Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтне упраса хăварас ыйту пирки çеç мар, ăна çĕнĕ шая çĕклесси пирки йышăну тунă, тухăçлăх енчен тивĕçтерсе çитереймен категорирен тепĕрне – оптимизаци ирттермеллисен йышне – куçарнă. Çакă, паллах, шанăç çуратать. Анчах та çапла пултăр тесен учреждени ертÿлĕхĕн палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес енĕпе питĕ пысăк ĕçсем пурнăçламалла. Çакна институтăн Аталану программине хатĕрленинчен пуçламалла.

Шăпах асăннă документа сÿтсе яврĕç те ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министерствин коллегийĕн ларăвĕнче. Институт ректорĕ Ирина Медведева палăртнă тăрăх – аслă шкулти виçĕ факультетра 481 çын пĕлÿ илет. Вĕсене культурăпа искусство тытăмĕнчи 11 специальноçпа хатĕрлеççĕ. 9 кафедрăра 86 преподаватель /çав шутра 67 проценчĕн ăслăлăх степенĕ тата ят пур/ ĕçлет. Хальхи вăхăтра институтăн пурлăхпа техника никĕсĕ лицензи нормине тивĕçтерет. Спорт залĕ, столовăй пур. Массăллă мероприятисем ирттерме 500 вырăнлă вĕренÿ театрĕпе усă кураççĕ.

– Мониторинг пире хастарлăха ÿстерме хистет,– терĕ Ирина Медведева. – Юлашки вăхăтра грант çĕнсе илес енĕпе ытларах ĕçлетпĕр. Сăмахран, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн, Ренова фончĕн тата ыттин гранчĕсене тивĕçме проектсем çырнă. Вĕренсе тухнисене ĕçе вырнаçтарасси пирки çакна каламалла: ытларах чухне ку енĕпе хамăрах ĕçленĕ. Çапах та чăрмавсем те пулаççĕ: хăшĕсем пĕлĕве малалла тăсаççĕ, каччăсене салтака илеççĕ тата ытти те.

Коллеги членĕсен шухăшĕпе – институтăн эффективлăхне палăртакан тĕп критерисем çаксем: унта пĕлÿ илекенсен вĕренÿ пахалăхĕ тата вĕсем культура тытăмĕнче кирлĕ пулни. Çавна май вузăн ĕç рынокĕнчи лару-тăрава шута илсе тăмалла, маркетинг тĕлĕшпе тухăçлă ĕçлемелле.

■ **Надежда СМИРНОВА**

Чыслав

"Сирĕн умра пуçа таятпăр!"

Ăрусен ылмашăвĕ – çитĕнÿ çăл куçĕ, аталану хăвачĕ. Аслисем хăйсен пуян опытне çамрăксене пиллесе хăварса каяççĕ... Çамрăксем вĕсен ĕçне тăсма сăмах парса малалла ăнтăлаççĕ. Ку – çут çанталăк саккунĕ, унран иртеймĕн. Ĕнер Шупашкарти Тĕп хула больницин коллективĕ, медицина ĕçĕн ветеранĕсем çак учреждение 25 çул ертсе пынă Валентина Теллина тĕп тухтăра чаплă лару-тăрура тивĕçлĕ канăва ăсатрĕç.

● *А.Самойлова вице-премьер В.Теллинăна саламлать.*

В.Теллина тĕп хулари строительсен поликлиникин /халăхра вăл çакăн пек ятпа паллă/ тĕп тухтăрне 1988 çулта çирĕплетнĕ. Тăвайĕнчи участок больницинчен кунта ĕçлеме килнĕ пултаруллă тухтăра аслисем часах асăрханă, яваплă ĕç шанса панă. Шаннине тÿрре каларнă вăл. Коллектива нумай çул ăнăçлă ертсе пынă, учреждени ĕçне тивĕçлĕ йĕркелеме пултарнă. Валентина Андреевна – Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тухтăрĕ, ăна "Сывлăх сыхлавĕн отличникĕ" паллăпа чысланă. В.Теллина общество ĕçне хастар хутшăнать. Вăл – "Чăваш Республикин медицина ассоциацийĕ" общество организацийĕн председателĕ, РФ Президенчĕн В.Путинăн шаннă çынни...

– Пирĕнтен кашнин чĕринче Валентина Андреевна пилленĕ ăшăлăх, ырăлăх пуррине туять. Пурнăç çулĕ çинче çакăн пек вĕрентекенсемпе, вырăнлă ятлама, анне вырăнне пулса ăс пама пĕлекен çынсемпе тĕл пулни, чăннипех те, пысăк телей, – палăртрĕ ЧР вице-премьерĕ – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова. – Кашниех хăйĕн шкулти, институтри, ĕçри пĕрремĕш вĕрентекенне ас тăвать. Тин кăна ĕçе килнĕ çамрăкшăн пĕтĕмпех ансат пулассăн туйăнать. Шел те, апла мар. Юнашар Валентина Андреевна пек шанчăклă вĕрентекен, ĕçтеш пулсан чылай çăмăлрах. Чирлисене сипленĕшĕн, учреждени ĕç-хĕлне тивĕçлĕ туса пынăшăн – пуриншĕн те пысăк тав сире, Валентина Андреевна! Мĕн пур коллектив, çак тăрăхри халăх сирĕн умра çĕре çити пуç таять.

А.Самойлова министр В.Теллинăна ЧР Пуçлăхĕн тата Сывлăх сыхлав министерствисен тав хучĕсемпе чысларĕ.

"Пулăшу кĕтекен кашни çынна кирек епле майпа та пулăшасчĕ", – çакăн пек пурнăç тĕллевĕ пулнă В.Теллинăн. "Вăл ăна этем пек те, тухтăр пек те туллин пурнăçланă", – пĕтĕмлетрĕç ĕçтешĕсем, унăн ĕçне малалла тăсакансем.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

Хисеп

Паян та канăçсăр чун-чĕреллĕ

Валериан Дубинин Элĕк районĕнчи Анат Татмăшра 1939 çулхи кăрлачăн 28-мĕшĕнче çуралнă. Вăл утса тухнă кун-çул пуян та мухтавлă. Çирĕп тĕллевлĕ каччă 21 çултах Хусанти ял хуçалăх институтĕ хыççăн инженер-механик пулса тăнă. Ĕç биографине çамрăк специалист Çĕмĕрле районĕнчи "Алгашинский" совхозăн юсав мастерскойĕнчен пуçланă. Тепĕр çулхине ăна Патăрьел районĕнчи "Гвардеец" колхоза тĕп инженера куçараççĕ.

Валериан Харитоновича производствăра пуçарулăх кăтартнăран, хушнине тĕплĕ пурнăçланăран тăтăшах яваплă ĕçсене шанаççĕ. 1970 çулта ăна Шупашкар районĕн ĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхне лартаççĕ. Тепĕр çулах В.Дубинин кунта ĕçтăвком председателĕ пулса тăрать. Ку должноçра вăл 8 çул вăй хурать.

Пурнăçĕн çур ĕмĕрне обществăпа политика ĕçĕхĕлĕпе çыхăнтарнă Валериан Дубинин хăйĕнчен те, коллективран та çирĕп ыйтакан ăста ертÿçĕ пулнипе палăрнă.

1978 çулта В.Дубинин – КПСС Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, тепĕр виçĕ çултан – Чăваш АССР ял хуçалăх министрĕ.

Республикăра Патшалăх агропромышленноç комитетне туса хурсан Валериан Харитоновича 1986 çулта унăн ертÿçи çумне çирĕплетеççĕ. Çав вăхăтрах вăл комитетăн кадрсен тата вĕренÿ заведенийĕсен пайне ертсе пырать. 1991-2001 çулсенче Чăваш Енри аграрисене çĕнĕ пĕлÿ паракан тата квалификацине ÿстерекен институтăн ректорĕнче ĕçлет.

Экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.Дубинин 2003 çулхи кăрлачра преподаватель ĕçне куçать. Педагогикăра вăй хурса Валериан Харитонович доцент 23 ăслăлăх ĕçĕ, çав шутра 2 монографи хатĕрлесе пичетленĕ.

Раççей тата Чăваш Ен Правительстви унăн производствăри тата ăслăлăхпа педагогикăри ырă ĕçне пысăк хак панă. "Хисеп Палли" орден, Халăхсен туслăхĕн орденĕ, медальсем, тĕрлĕ шайри Хисеп хучĕсем Валериан Дубинин пысăк чыс-хисепе тивĕçлине çирĕплетеççĕ. 2009 çулта ăна "Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ" хисеплĕ ят панă.

Валериан Харитонович паян та канăçсăр чун-чĕреллĕ. Вăл республикăри АПК ветеранĕсен пĕрлĕхĕнче тăрать, унăн ĕçне хастар хутшăнать.

■ **В. ВАЛЕНТИНОВ**

Хушма кăларăм

Вĕрентӳ

Пуçарулăх

Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă

Вăрмар районĕнчи Тикаш тулли мар вăтам шкулĕнче пулса курнă хыççăн шăпах çак сăмахсем пуçа килчĕç. Çурчĕ пĕчĕк мар-ха: икĕ хутлă, кирпĕчрен. Самана нуши /ял çамрăк çемьесем тĕлĕшпе чухăнлансах пыни, ача шучĕ чакни/ кунта та хăйĕн хŭрипе килсе перĕннĕрен вунă-вун пилĕк çул каялла кĕрлесе тăнă пĕлŭ çурчĕ паян йышĕпе мухтанаймасть. Апла пулин те хăйĕн çирĕпленнĕ йăлисене тытса пыни, мал ĕмĕтпе пурăнни кунта алăкранах туйăнать. Республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи вĕренӳ учрежденийĕнче час-час пулма тŭр килет те – танлаштарма май пур: Тикаш шкулĕн коллективĕ – алсисем те, кĕçĕннисем те – чăнахах туслă. Пĕр-пĕрне пулăшма, хŭтĕлеме васкани тŭрех курăнать.

● «Пĕчĕк Уляндина» теççĕ ун пирки.

Голландирен те хăнана килнĕ

«Ушкăнра – вăй, – терĕ манăн сăмахсене çирĕплетсе директорăн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Николай Анатольевич Тимофеев. – Вĕрентекенсен, шкул ачисен пултарулăхĕ пирки каласас тăк чылай пуçарăва пысăк йышпа хутшăннине палăртмалла. Уйрăмах спорт мероприятийĕсене хавхаланса çŭретпĕр. Сăмахран, вĕрентекенсем волейболла выляма, йĕлтĕрпе чупма, çăмăл атлетика енĕпе ăмăртма çŭреççĕ. Кĕлеткене бассейнра ишсе пиçĕхтерме те килĕштеретпĕр. Надежда Ульянова, Николай Тимофеев, Татьяна Иванова, Джемма Белова, Людмила Иванова – спорт мероприятийĕсене тăтăшах хутшăнакансем».

Вăрмарсем спортпа чăнахах туслине пĕлетĕп: ку тăрăхран паллă спортсмен чылайăн тухни витĕм кŭретши? Тикашсен вара хăйсен ырă тĕслĕхĕ пур: хăй суйланă профессие çав тери юратакан, сиенлĕ йăласемпе нихăçан та айкашман Олег Мефодьев физкультурник. Хастар вĕрентекен районта иртекен кашни спорт мероприятине çынсене илĕртме пĕлет. Вăл – «Çулталăк вĕрентекенĕ-2013» конкурсăн районти лауреачĕ те.

Анчах шкул общество пурнăçĕн пур тытăмĕнче те хастар пулма тăрăшать. Ачасен аслă тусĕ /вожатăй/ Людмила Иванова, çак шкултах вĕреннĕскер, çул çитменнисене мĕнле кăна мероприятие явăçтармасть-ши! Хĕрлĕ Çырта çуралса ŭснĕ вăл, вăтам шкул хыççăн ЧПУра химии факультетне вĕренме кĕнĕ. Ачаранпах тăван тавралăха килĕштерекене шăпи кунтах илсе çитернĕ: Людмила Витальевна Тикаша кавча тухнă. Тавра пĕлŭ урокĕсене çитĕнекен ăрушăн кăсăклă ирттерме тăрăшать вăл.

– Пирĕн вĕрентекенсен хушшинче пултаруллă çынсем йышлă. Хăйсем суйланă предметпа лайăх специалист пулни – пĕрре, чун киленĕçĕ те кашнин хăйне евĕр. Акă Надежда Михайловна Ульяновăна илер. Çулла тепре килĕрха, вĕсем патне – ятарласах. Мĕнле кăна пахча çимĕç, ŭсен-тăран çук-ши вĕсен хушма хуçалăхĕнче. Мăшăрĕ – фермер – Голландири пуçаруллă çĕр ĕçченĕсемпе туслашнă та – инçетри хăнасемпе тăтăш çыхăну тытаççĕ. Иртнĕ çулла хайхискерсем килсе те кайнăччĕ. Ун чухне шкулта чăн-чăн уяв ирттертĕмĕр. Ачасем ют çĕршыв çыннисем киличчен ятарласа акăлчан чĕлхине тĕплĕнрех вĕренчĕç. Пĕр сăмахпа, Чăваш Ен чиккинче пурăнатпăр та тĕнчерен уйрăлса кайнă тесе ан шухăшлăр – кичемленсе-мăкланса лармастпăр, – Людмила Витальевнăн çуталса тăракан сăнĕ вăл тĕрĕссинех каланине çирĕплетет.

Тикашри «Уляндина»

Тикашсен хăйсен Уляндини пур. Пиллĕкмĕш класра ăс пухакан Света Черновăпа паллашсан унра чăн-чăн артист пултарулăхĕ пытаннине асăрхарăм. Çук, хăйне «çăлтăрла» ирĕклĕ тытнăран мар. Пач урăхла – сăпайлă хĕр ача хăйне килĕшŭллĕ тыткалама пĕлнĕрен тата... «Эсĕ хитре юрлатăн тенине илтрĕм. Мана та пĕр çавра юрласа кăтартмăн-ши?» – ыйтрăм хĕр пĕрчирен. Килĕшрĕ. Чăвашсен çепĕççĕн янăракан «Илемлĕ» хайлавне кĕвĕпе сăмах кашни шайлашăвне шута илсе хитрен шăрантарчĕ. Акă вăл талант! Музыка ятарлă пĕлĕвне те илмест вĕренекен – турă панă ăсталăхĕпе, хăйĕн ăнкарулăхĕпе чăн илем çуратать!

«Мĕн çинчен-ха çак юрă?» – хăпмастăп хĕр ачаран. «Чăваш халăхĕ çинчен, вăл пирĕншĕн чи хакли пулни çинчен», – урокри пекех хуравлать маттурскер. Сăмах май, тăван чĕлхе тата вырăс чĕлхи урокĕсем уншăн чи килĕшекеннисем иккен. Тата, паллах, юрламалли хăнăхусем.

Вĕренӳ тытăмĕнчи тŭресем хушма вĕренӳ пирки çивĕч калаçаççĕ. Паллах, районсенчи шкулсенчен чылайăшĕнче çакăн валли пурлăх никĕсĕ чухăнрах. Ачасен интересĕсемпе пĕлŭ парассине пĕлтерĕшлĕ вырăн уйăратпăр пулсан ун валли кирлĕ хатĕрхĕтĕр туянас пирки те тимлĕхе вăйлатмалли куç кĕрет. Ыйтăва кирлĕ пек татса пани шăпах Светлана Чернова пек пуçаруллă ачасен аталанас çулне уçса парĕччĕ те.

■ **Ирина ПУШКИНА.**

Автор сăн ŭкерчĕкĕ

Çивĕч ыйту

Лицей шăпи каластарать

2012 çулхи утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче Шупашкар хулин вĕренӳ управленийĕ 490-мĕш хушу кăларчĕ. Юсав ĕçĕсем тăватпăр тесе Г.С.Лебедев ячĕллĕ наци интернат лицейне вăхăтлăха ĕçлеме чарчĕç. Лицейра вĕренекен 380 ачаран 200-ĕшне ял шкулĕсене ăсатрĕç, 100 яхăн ача хула шкулĕсенче вĕренме юлчĕ. 1963 çулта тунă лицей çурчĕсене тахçантанпах тĕплĕ юсаман. Вĕсене хăтламалла тенипе эпир килĕшетпĕр. Лицей ĕçлеме чарăннăранпа кĕçех 2 çул çитет. Сĕтел-пукана общежитисенчен тахçанах кăларса хунă. Шкул класĕсенчи компьютерсене пĕлтĕр çулла урăх çĕре илсе тухса кайнă. Çулталăк ытла ахалех лартăмăр, лицейра нимĕнле юсав ĕçĕ те ирттермерĕç. Çак тĕллевпе пĕр пус та бюджета хывман, çавăнпа нимĕн те тумаççĕ. Тĕрĕссипе – 2014 çулта юсама палăртнă хула шкулĕсен списокне лицее кĕртмен те.

2013 çулхи кĕркунне лицее пыракан сивĕ шыва тата çуртсене ăшăтакан вĕри шыва чарма хăтланса пăхнă, анчах лицей çурчĕсем айĕпе иртекен пăрăхсем шкулпа юнашар ларакан çуртсемпе çыхăннă иккен. Сивĕ тата вĕри шыва чарсан çав çуртсем хĕн курассине, лицее шывсăр хăварни мĕн патне илсе пыма пултарассине ăнланса илнĕ тŭре-шаран ку шухăша пăрахăçлама тивнĕ. Ирĕксĕрех 2014 çулта шкулăн коммуналлă ыйтăвĕсене тивĕçтернĕшĕн укçа тупма тивнĕ вĕсен.

Лицейăн виçĕ тĕп çуртне хальлĕхе ватманха, вĕсем тŭре-шарана ĕненсе хăйсене юсасса кĕтеççĕ. Сăмах панине 3 çул кĕтеççĕ теççĕ ваттисем. «Тепĕр çулталăк тăхтама тивет пуль», – хаш сывлаççĕ шанчăка çухатман, лицейран ĕç кĕнекине илсе каймасăр урăх шкулсенче вăхăтлăх ĕçлекен учительсем. Шаннă йăвара кайăк çук иккен.

Пултаруллă ачасен шкул çуртне хальхи наци интернат лицейĕ /Шупашкар хули, Граждан урамĕ, 54 çурт/ вырнаçнă çĕрте мар, пачах урăх вырăнта – Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищи çумне хушса тума палăртнă. Çав шкулăн йĕркелŭçи /учредителĕ/ ЧР Культура министерстви пулать. Çĕнĕ шкулта пĕтĕмĕшле пĕлŭ панисĕр пуçне музыкăна тĕплĕн вĕрентмелле теççĕ. Ăна та пулин – 9 класс таран анчах. 10-11-мĕш классене вĕрентсе патшалăх укçине тăкаклас темеççĕ – вăл ŭсĕме çитнĕ ачасене тŭрех музыка училищине йышăнма тĕв тăваççĕ.

Çĕнĕ шкул лицей шайлă шкул мар, музыка шкулĕ пулать иккен. Çакăн пек мелпе кŭршĕри Мари Элта ĕçлеççĕ. Кунашкал сĕнĕвĕн тĕшши пурри куç кĕрет, мĕншĕн тесен юлашки çулсенче музыка училищинче вĕренме кăмăллакансен йышĕ самаях чакнине пĕлетпĕр.

Тутарстанра вара урăхларах, тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Эпир пĕлнĕ тăрăх – Хусан хулинче наци 5-6 шкулĕ пур. Вĕсенче тăрăшсах наци элитине хатĕрлеççĕ. Хăй вăхăтĕнче Чăваш Республикинче Чăваш-туркка лицейĕ, Етĕрне наци гимназийĕ, Трак чăваш-нимĕç гимназийĕ, Шупашкарта Г.С.Лебедев ячĕллĕ Чăваш наци интернат лицейĕ пурччĕ. Эпир мĕн пуррине упрама пĕлеймерĕмĕр. Тĕрлĕ сăлтав тупса малтан – пĕрне, унтан теприне хупрĕç. Хупма çăмăл, уçма вара... Хальхи вăхăтра çĕнĕ шкул тума татах та йывăр пулать. Хак кунсерен ŭссе пырать. 2014 çулта музыка çĕнĕ шкулĕн проектне тума – темиçе миллион, шкулне хăтлама вара 420 миллион тенке яхăн укçа кирлĕ теççĕ. Апла-и е капла-и – музыка çĕнĕ шкулне хăçан та пулин пур пĕрех тăвĕç.

Пире вара, учительсене, ашшĕ-амăшне – паянхи кун тăлăххăн ларакан лицей çурчĕсен шăпи шухăшлаттарать, кулянтарать. Хальлĕхе иртен-çŭрен сăтăрла ĕçсем тумасть-ха. Хŭтлĕхсĕр юлнă çуртсене усалсем куç хыврĕç тĕк?.. Пирĕн шухăшпа, лицей шăпине паянах – тĕплĕн виçнĕ хыççăн – татса пама тăрăшмалла. Халăхăн шухăшне ыйтса пĕлмелле, шута илмелле. Чăваш Республикинче тăван чĕлхепе культурăна аталантарас тата наци вĕрентĕвне çĕнетес шухăшлисем чылай. Чăвашăн пулас элитине хатĕрлессине Шупашкарта Чăваш наци лицейĕ ĕçленипе тŭр килтерекенсен йышĕ те самаях. Чăвашлăха тытса пыракан, наци кадрĕсем хатĕрлекен шкул кирлех.

■ **Геронтий НИКИФОРОВ,**
Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ

Редакцирен: *Лицей шăпи республикăра пурăнакан чылай çынна пăшăрхантарнăран вăл малашне мĕнлерех пулассине пĕлме тăрăшрăмăр.*

Иртнĕ çул вĕçĕнче Чăваш Ен прокурорĕ Владимир Метелин вĕрентĕвĕн асăннă заведенийĕ тĕлĕшпе акă мĕн палăртнă: унăн шухăшĕпе – лицее хупни патшалăх политикин вĕрентӳ тытăмĕнчи тĕллевĕсене, çемье хаклăхĕсене мала хурас тата пултаруллă ачасене аталанма пулăшас ăнтăлава хирĕçлени. Тĕрĕслев ирттернĕ хыççăн прокуратура Шупашкар хула администрацине саккуна пăснă самантсене сиресси çинчен представлени тăратнă. Çакăн çинчен республика Пуçлăхĕ патне те информаци çитернĕ. Çырура лицей Чăваш Енри тата унăн тулашĕнчи ял ачисене йышăнакан интернат типлă нумай профильпе вĕрентекен пĕртен пĕр инноваци учрежденийĕ пулнине палăртнă.

Представление пăхса тухнă хыççăн Шупашкар хула администрацийĕ ЧР Министрсен Кабинетне асăннă заведение муниципалитет харпăрлăхĕнчен республикăнне куçарма ыйтса çырнă. Паянхи кун тĕлне лицее хупма йышăнман-ха. Учрежденире юсав ĕçĕсем ирттерсе вĕренӳ занятийĕсене малалла тăсасса кĕтесси çеç юлать...

Çавра сĕтел

Çуралнă тăрăхран лайăхраххи çук

«Хыпарăн» иртнĕ номерĕсенчен пĕринче республикăри чи лайăх шкулсен ертŭçисемпе тата вĕсенчи пултаруллă вĕренекенсемпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ тĕл пулни çинчен çырнăччĕ. Аслисемпе танах кĕçĕннисем те пĕр тема тавра калаçрĕç ун чухне: паянхи шкулăн çитĕнекен ăрава мĕнлерех, мĕне вĕрентмелле? Пĕлŭ шайне мĕнле хаклламалла? Хăш-пĕр педагогăн тата вĕренекенĕн шухăшĕпе уйрăммăн паллашарха.

Людмила КУЗЬМИНА, 44-мĕш лицей директорĕ:

– Ачасем шкула пуçласа килнĕ саманта куç умне кăларар-ха. Мĕнлерех йăлт пĕлесшĕн çунаççĕ вĕсем! Тĕрĕссипе, çав туйăм – питĕ пĕлес килни – ачара мĕн çитĕнинченех тăрса юлмалла. Çавăн чухне класра «вĕренни мĕн тума кирлĕ» тесе шухăшлакан пачах пулмĕ. Аслă классене çитнĕ тĕле ачан малашне хăй мĕнле çул-йĕр суйласса пĕлмелле. Çав вăхăтрах ашшĕ-амăшĕн те, пепкин те чи кирли журналти паллăсем маррине ăнланмалла.

Наталья БАХМИСОВА, 18-мĕш лицей директорĕ:

– Хальхи вăхăтра шкул ачисене ĕç рынокĕнчи профессисене суйласа илме вĕрентмелле. Апла тăк вĕренекенсен халăх хуçалăхĕ ыйтакан специальноçсем пирки ытларах пĕлмелле. Çак тĕллевпе эпир темиçе çул ĕнтĕ Мускав тата Питĕр хулисенчи аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе туслă çыхăну тытатпăр. /Чăваш Енри вузсем пирĕн шухăша пурнăçа кĕртме темшĕн васкамаççĕ?/ Преподавательсем пирĕн пата килеççĕ, хăйсен университет-институтĕнче мĕнле кафедрăсем пурри, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕн каласа ăнлантараççĕ.

Николай РЕЗЮКОВ, 5-мĕш гимназин вĕренекенĕ:

– Эпĕ кăçал алла аттестат илĕп. Хам пурнăçра предприниматель çулне суйласса пĕлетĕп. Кăçал шкул ертŭлĕхĕ, вĕрентекенсем пулăшнипе предпринимательлĕхпе çыхăннă проект хатĕрлерĕм.

Андрей ПАВЛОВ, 46-мĕш гимназин вĕренекенĕ:

– Шкулсенче уроксем иртни кăна çителĕксĕр. Кашни ачан мĕнле те пулин турăм-киленĕç пурах. Вĕрентекенсен çавсене асăрхама пĕлмелле. Ачасенчен чылайăшĕ çĕр-шывăмăрта мĕнле профессисем пуррине чухламаççĕ. Çавна пулах хăш-пĕри аслă шкул пĕтерсен хăйĕн специальноçĕ килĕшменнине ăнланса илет. Хамăрăн хутлăхрах ĕç тупсан патшалăхшăн та аван вĕт-ха.

Ольга АНТОНОВА, 4-мĕш гимназин вĕренекенĕ:

– Пирĕн шкул ют чĕлхесене тарăннăн вĕрентессипе лайăх ĕçлет. Пурнăç кунта чăнласах вĕресе тăрать: пурте тĕрлĕ проекта хутшăнма тăрăшаççĕ. Пĕринче эпĕ те чи пуçаруллисен шутĕнче пулса Америкăра вĕренме ирĕк илтĕм. Тинĕс леш енчи çĕршывра пĕр пĕчĕк хулара вунă уйăх пĕлŭ пухрăм. Чаплă – нимĕн те калаймăн! Анчах Шупашкаршăн – тăван хулашăн – çав тери тунсăхласа çитрĕм. Халĕ, тĕнче курнă хыççăн, манăн малаллахи шăпана ăнăçтарма майсем çителĕкл�с. Пур пĕрех тăван республикăрах юлас килет. Малашлăхра аталанма майсем пулччăр çеç... Патшалăх енчен ку тĕлĕшпе витĕмлĕ пулăшу пулĕ-ши?

Михаил ИГНАТЬЕВ, Чăваш Ен Пуçлăхĕ:

– Ольга, шухăшна лайăх ăнланатăп. Эсĕ Европăн пуян та чаплă çĕршывĕнче пулнă хыççăн кашни утăмра танлаштару патне пырса тухатăн. Тавлашмăп: Америкăра ăслă çыншăн аталанма çул уçă. Анчах чи кирлине ăнланса илнĕ эсĕ: ют вырăнта хĕвелĕ те ют! Пирĕн, Раççейри халăхăн, кирек камшăн та пĕлтерĕшлĕ хаклăх пур – ушкăнлăх туйăмĕ. Эпир ĕçре хамăршăн кăна çунмастпăр, коллектившăн та пăшăрханатпăр. Юлăр кунтах, малалла вĕренĕр – пултарулăхăра кура кадрсен резервне паянах йышăнăпăр.

■ **Ирина ИВАНОВА**

Ят-сум

Вĕрентекене хисеплесе, е Шурă шлепке мыскари

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Ю.Е.Марков 90 çул тултарчĕ пулин те халĕ те ял пухăвĕсенче пулма тăрăшать. Акă Çатра-Хочехмат шкулĕ ĕçлеме пуçланăранпа 100 çул çитнине палăртма хутшăнчĕ. Юрий Егорович шкул историне каласа пачĕ, хăй çак шкулта ĕçленĕ чухнехине аса илчĕ тата хальхи саманара вĕсене мĕнле вĕрентмелли пирки ырă сĕнŭсем пачĕ.

Вăл Иккасси шкулĕнче директорта нумай çул ĕçлерĕ. Тивĕçлĕ канăва тухсан та ачасене чылай çул вĕрентрĕ. Пире истори предмечĕне «çутта» кăларатчĕ. Хор кружокне ертсе пыраканскер ачасене районти акатуя илсе тухатчĕ. Пĕррехинче вĕсен концертне эпир телевизорпа курса савăнтăмăр. Аса илмелли нумай. 5-мĕш класра вĕреннĕ вăхăтри пĕр саманта вулакана каласа парас килет. Юрий Егорович класа пычĕ те концерт лартма пире, Самуккассин виçĕ каччине, суйласа илчĕ: Гена Матвеева, Борис Порфирьева тата мана. Шел, Борис та, Гена та пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă. Пĕр-икĕ кун репетици ирттертĕмĕр. Пирĕн номер шŭтлĕрех пулнăран, Юрий Егорович кулăшларах тăхăнса килме ыйтрĕ. Туссем карттус тăхăнса килетпĕр терĕç. «Сан аçу учительте ĕçлет, эсĕ Алексей Платоновичăн шурă шлепкине тăхăн», – терĕç.

Концерта нарăс уйăхĕн 23-мĕш тĕлне, хальхилле каласан Тăван çĕр-шыв хŭтĕлевçин кунне, халаллăччĕ. Вăт тухса тăтăмăр виçĕ пĕчĕк ача клуб сцени çине. Пуçăмăрсенче – икĕ карттус та шлепке, алăсенче – мандолина, урасенче – çăм атă. Залра лăк! тулли ял халăхĕ, вĕтĕ шăпăрлансем тата шкул ачисем. Пуçларăмăр хамăрăн такмаксене шăрантарма. Юрласа пĕтерсен курма килнĕ çынсем тăвăллăн алă çупрĕç. Халăх ыйтнипе тепре юрлама тиврĕ.

Çавăн хыççăн манăн атте шурă шлепкине нихăçан та тăхăнмарĕ. Ара, тăхăнма майĕ те çукчĕ. Концерт пуçланас умĕн шлепкене, кулăшларах пултăр тесе, юлташсем веçех лутăркаса пĕтернĕччĕ.

Юрă урокĕсенче Ю.Марков пире сĕрме купăспа пулăшса пыратчĕ.

Ялти – Шорккари – фольклор халăх ансамблĕ ытти района тухса ял-йыша çепĕç юрăсемпе, илемлĕ ташăсемпе час-часах савăнтарать. Нумаях пулмасть Мускав сцени çинче те хамăр пултарулăхпа тĕлĕнтертĕмĕр.

Иртнĕ вырсарни кун Ю.Маркова хисеплесе Иккасси клубĕнче пысăк мероприяти йĕркелерĕç. Юрий Егоровичăн ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ, вăрçăра паттăр çапăçни, шкулта ачасене вĕрентни пирки каласа кăтартрĕç.

Самуккасси ялĕнчи 14 çынран /çав шутра – патвар 5 арçын/ тăракан фольклор ушкăнĕ юррипе, ташшипе сехет çурă савăнтарчĕ.

Иккассинчи халăх хорĕн юрринсене те çынсем хапăл туса йышăнчĕç.

Шорккари клуб заведующийĕ Л.Платонова юбиляра саламласа «Туслăх» халăх фольклор ансамблĕнчен парне кŭчĕ – шŭтлĕ юрă шăрантарчĕ.

Иккасси клуб директорĕ Г.Емельянова, тĕл пулу йĕркелŭçи, килнĕ артистсене тав турĕ.

■ **Николай ПЛАТОНОВ.**

Шупашкар районĕ, Шорккa

Ăсталăх

Династи çулĕ малалла тăсăлать

Кулленхи хĕрŭ ĕçпе тата пурнăçри чăтăмлăх-тŭсĕмлĕхпе туптанса аталаннă пултарулăх пуррине хăйĕн пархатарлă тĕслĕхĕпе çирĕплетсе парать педагогикăра сулмаклă утăмсем тăвакан Ольга Александровна Сибетова. Талант тени çичĕ хут тар кăлармасăр, пурнăçран вĕренсе пымасăр, чăн-чăн ăсталăх çулĕ çине тăмасăр «çуралмассине» питĕ лайăх ăнланать вăл.

Ольга Александровна «тĕрленĕ» çырури йĕркесенчен: «Эпĕ Йĕпреç тăрăхĕнчи Копеевсен йăхĕн тăхăмĕ пулнипе тивĕслипех мăнаçланатăп. Педагогикăри пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ пирĕн 500 çула яхăнах. Çăмăл мар профессие чи малтан суйласа илнисем – Иустиния Ефремовнăпа Яков Акимович Копеевсем. Мăшăр иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчех Хусан университетĕнче аслă пĕлŭ илсе дипломлă специалистсем пулса тăнă. Яков Акимович И.Я.Яковлев йĕркеленĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă...»

Çамрăк педагогсене Улатăр хулине янă. Яков Акимович – вăрман техникин рабфакĕнче, Иустиния Ефремовна педагогика техникумĕнче пĕлŭ пама тытăннă. Анчах ĕçри тата çемьери тăнăçлăх нумая тăсăлайман: «троцкистсемпе» пĕр шухăш-каварлă тесе кил хуçисене 1937 çулта Çĕпĕре янă. Тăван яла вăл сусăрланса, сывлăхне хавшатса таврăннă. Юратнă ĕçрен ирĕксĕрех уйрăлма тивнĕ. Яков Акимович çакăн хыççăн хăйĕн килти хуçалăхĕнче пахча çимĕç çитĕнтерме пуçланă.

Копеевсен династийĕ çинчен Ольга Александровна пуян материал пухнă. Хăй вĕрентŭçĕ профессине, физик ĕçне мĕншĕн кăмăлланăха? Хуравĕ уçăмлă: ара, Яков Акимовичпа Иустиния Ефремовнăн ывăлĕ Юрий Яковлевич вĕсен йăхĕнче пĕрремĕш физик пулнă-çке! Тата унăн куккăшĕ, амăшĕн тăван пиччĕшĕ Сергей Степанович та ачасене физикăпа математика вĕрентнĕ. Сергей Степановичпа Агреппина Гавриловна Копеевсен 7 ачинчен тăваттăшĕ хăйсен пурнăçне педагогикăпа çыхăнтарнă. «Манăн анне Анна Степановна Чăваш Çармăсри пуçламăш шкулта 1979 çулчченех ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Çывăх çыннăмăр хăйĕн ырă тĕслĕхĕпе мана та, Нинăпа Людмила йăмăкăмсене те шкул ĕçне юратма хавхалантарчĕ» – вулатăп çырура.

Ольга Иванова /хĕр чухнехи хушамачĕ/ И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче «физик» специальноçа илнĕренпех тăван районĕнчи Хурамал вăтам шкулĕнче тăрăшать. Общество пурнăçĕнче те хастар. Ĕçленĕ тапхăрта тĕрлĕ çĕртен панă грамотăсемпе дипломсем, Тав çырăвĕсен шучĕ те çук.

Ольга Александровна, халĕ те спортпа туслăскер, тĕрлĕ шайри ăмăртусене хутшăнмасăр юлмасть, ялан тенĕ пекех ветерансен хушшинче малти вырăнсене йышăнма вăй-хал çитерет. Студент çулĕсенче велосипедпа та, йĕлтĕрпе те ăмăртнă, хăвăрт утакансен секцине çŭренĕ. Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ Геннадий Семенов патĕнче ăсталăхне ŭстерме тŭр килнине паян та ырă кăмăлпа аса илет.

Эккей, ытла та хăвăрттăн иртсе пырать вăхăт! Ольга Александровна халь хăй тахçан вĕрентнĕ хĕрсемпе каччăсен ачисене пĕлŭ парать. Вăл вĕрентсе кăларнă çамрăксен хушшинче пурнăçра кирлĕ професси çыннисем сахал мар. Уявсенче, паллă кунсенче педагог вĕсенчен ăшă сăмахсем йышăнать.

Унăн вĕренекенĕсене шкул, район, республика шайĕнчи турнирсемпе олимпиадăсенче çĕнтерŭ тунисен йышĕнче курма пулать. Пĕлтĕр вара вăл пĕлŭ панă 3 хĕр «Пулас ăрусен хастарлăхĕ» Пĕтĕм Раççейри конкурса тăратнă тĕпчевпе проект ĕçĕсемшĕн пĕрремĕш степень Дипломне тивĕçнĕ. Халĕ виççĕшĕ те – Мускаври аслă вĕренӳ заведенийĕсен студенчĕсем.

Анна Степановнăпа Александр Дмитриевич Ивановсен /шел, иккĕшĕ те пурнăçран ытла ир уйрăлса кайнă/ хĕрĕ Ольга Копеевсен аслă ăрăвĕ хывнă çулпа малалла хăюллăн утать, ăна кура çак йăхри çамрăксем те династин пĕтĕмĕшле стажне пуянлатса пыраççĕ.

Иртнĕ çулхи чŭк уйăхĕнче тивĕçлĕ канăва тухма вăхăт çитсен юбилей кĕрекинче хĕрарăм ытларах хыçа юлни çинчен мар, пуласлăх, хăй умне сырăнакан çĕнĕ çул-йĕр çинчен шухăшларĕ-тĕр ĕнтĕ. Паллах, педагогикăра курăмлă ŭсĕм тума ăна савнă мăшăрĕ Николай Иванович, ывăлĕ Александр, хĕрĕ Анна /иккĕшĕ те аслă пĕлŭллĕ/ тăвакан ăнăçуллă утăмсем, пиччĕшĕпе аппăшĕнчен тĕслĕх илсе шкулта лайăх ĕлкĕрсе пыракан Дима тĕрлĕ енлĕ ăсталăха аталантарассишĕн ăнтăлни нумай пулăшаççĕ.

Ольга Александровна ялти пуçламăш шкула çŭренĕ чухне хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенĕ – Николай Григорьевич Антипов – çине ăмсанса та тĕлĕнсе пăхнă, кайран вара М.Е.Евсевьев ячĕллĕ Ирçе Çармăс вăтам шкулĕнчи Иван Михайлович Громов физикăн кашни сăмахне ăша хывнă. Хĕр ача «шкулла» вылянă чухне хăйне çак вĕрентекенсем пек тытма тăрăшнă. Ку турăма вăл мĕн пурнăç тăршшĕпех упраса хăварнă. Вĕрентекен ыррипе лайăххине курса тăнипе пĕрлех çыннăн хуйхи-суйхине те ăнланма тăрăшать.

«Турă кама хĕн кăтартма шухăшлать – çавна педагог тăвать» текен каларăш çŭрет халăхра. Ольга Александровна ăна çапларах тŭрлетет: «Турă кама юратать – çавна педагог тăвать».

Ăсталăхне турă пилленĕ педагог кăна çапла калама пултарать.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.

Сиплевçё

Ангинăран

Сётпе пыл. 1 стакан сёте вёретмелле, сивёнсен унта 1 чей кашăкё пыл ярса пăтратмалла. Шурă çăкăр çемçи илмелле, сётре шÿтермелле. Кăштах вăхăтран çак çăкăра пёчёккён-пёчёккён çăтмалла. Кунне 5 хут çапла сипленмелле. Çывăрма выртас умён сёте те ăшăтса ёçмелле.

Лимон чăмласа. Ангинăпа аптăранине туйсанах лимон касăкне вăраххăн чăмламалла. Çакăн хыççăн 1 сехет нимён те çиме юрамасть.

3-4 сехетрен лимонăн пёчёк касăкне каллех чăмламалла.

Алоэ «ликерё». Алоэ çулçин сёткенёпе сахăр песукне пёр пек виçепе илмелле, пăтратмалла. 3-4 кун сулхăнрах вырăнта тытмалла, шурă эрех кăштах хушса тата 3-4 кун тёкёнмелле мар. Çак вăхăт иртсен сăрăхтармалла. «Ликера» кунне 3 хут апатчен 1-ер апат кашăкё ёçмелле.

Каланхоэ сётткенё. Каланхоэ сётткенне шывпа хутăштармалла /пёр пек виçепе илмелле/, кунне темиçе хутчен те пыра чÿхемелле. Çавăн пекех кунне 5-6 хутчен каланхоэ çулçине 10-шар минут чăмламалла.

Йодпа тăвар ирёлчёкё. 1 стакан вёренё ăшă шыва çуршар чей кашăкё тăвар, апат соди, 4 тумлам йод ямалла, пăтратмалла. Çак ирёлчёкпе пыра кунне 4-5 хут чÿхемелле.

Хёренпе пыл. Хёрене теркăпа хырмалла, сётткенне пăчăртаса илмелле, вёренё ăшă шыв, кăштах пыл хушмалла. Темиçе сехетрен эмел хатёр. Пыра çак шёвекпе кунне 3 хут чÿхемелле.

Хёллехи пусăрăнчăклăхран мёнле хăтăлмалла?

Кунсем кёске, каçсем питё вăрăм. Ёçе тёттёмре тухса каятпăр та тёттёмрех таврăнатпăр. Йёри-тавра шап-шурă юр выртать пулин те кăмăл-туйăм çуллахи пек лайăхах мар. Хёллехи пусăрăнчăклăхран мёнле хăтăлмалла-ши?

Сивё вăхăтри аппетит

Хёлле çăмăл апат, калăпăр, салат е улма-çырла, çиесех килмест. Хёллехи аппетита çуллахипе танлаштараймăн. Çак тапхăрта пире çуллахипе, кёркуннехипе танлаштарсан пысăк калориллё апат ытларах кирлё. Çавăнпа хёлле апата ларсан кашни к/калорие шутламасан та юрать. Унсăрăн кăмăл пушшех те пусăрăнма пултарать.

Йёлтёр йёрё çине тăр

Хёлле эпир питё сахал хускану тăватпăр /дачăна çÿреместпёр, пахчара ёçлеместпёр/. Тёрёссипе, канмашкăн çулталăк тăршшённе хёллерен лайăхрах кунсем тупаймăн та. Йёлтёр йёрё çине тăни, конькипе ярăнни мёне тăрать! Çанталăк сивё мар чухне урамра уçăлса çÿрени те çуллахипе танлаштарсан усăллăрах: халё сывлăш тасарах, пите кăштах чёпётекен сивё организма пиçёхтерет.

Сывăрас килет-и – çывăр

Çакна вăйсăрлăх вырăнне хурса йышăнмалла мар, çителёклё çывăрма тăрăшмалла.

Илемлё тёс кăмăл-туйăма лайăхлатать

Сивё вăхăтра кăмăл пусăрăннин сăлтавё – хёвел çути, ăшă, хитре тёссем çителёксёр пулни. Кăмăл-туйăма лайăхлатма илемлё тёссемпе усă курăр. Хёллехи гардеробра хёрлё тёс пулмалла /пирён çирен вара сăрă, хура тёссем каймаççё.../, ăсчахсем çирёплетнё тăрăх – вăл япаласен ылмашăвне лайăхлатать.

Эмел вырăнне – тăм

Тăмра пирён организма кирлё микроэлементсем пурте пур. Вăл шлаксене кăларать, япаласен ылмашăвне йёркене кёртме пулăшать. Тăмпа инçетри курорта кайса мар, килтех сипленме пулать, мёншён тесен тÿлевсёр çак эмел пирён ура айёнчех темелле.

Тăм мёнле пулмалла-ха? Кăвак тёсли уйрăмах паха. Ыттисем те сипленме юрăхлă. Сиплё енёсене вăйлатма тăма малтан хёвел çинче тытма сёнеççё.

Сиплев мелё ансат. Йёпетнё 3 сантиметр хулăнăш тăма ыратакан вырăнсем çине сарса хумалла, марльăпа е кивёрех татăкпа çыхмалла. Çиеле çăм япала хумалла, ăшă утиялпа витёнсе выртмалла. 2 сехетрен тăма илмелле, çапах та ăшă пÿлёмрен тухмалла мар.

Пёр хут усă курнă хыççăн тăм тепёр сиплев валли юрăхсăр.

Усăллă канашсем

● Томат сётткенё вар-хырăм ёçне лайăх витём кÿрет, апата ирёлтерме пулăшать. Ăна апатчен 20-30 минут маларах ёçмелле.

● Тăвар хушни томат сётткенён сиплё паха енёсене чакарать.

● Сётткене вётетнё ыхра, петрушка, кинза /чёрри те, типётни те юрать/ хушсан вăл пушшех те усăллăрах.

● Апатпа наркăмăшлансан пыл хушнă сётпе банан коктейлё пулăшать. Банан вар-хырăма çемçетет, пыл апатпа наркăмăшланнипе чакнă сахăр шайне кăштах ÿстерет, сёт организма лăплантарать. Çакнашкал шёвеке /нимёре/ çулталăкран иртнё ачасене те ёçтерме юрать.

● Тăпăрчри çу хисепё мён чухлё пысăкрах унта B_1, B_2, B_6 витаминсем çавăн чухлё ытларах.

Лавр çулçи сыватать

Лавр çулçи техёмлёх кăна мар, нумай чиртен сипленнё чухне эмел пекех.

● **Ангина.** 5 çулça вётетмелле, çур литр шыва ямалла. Çулăм çине лартса 3 минут вăйлах мар вёретмелле. Шёвек сивёнсен сăрăхтармалла, унпа пыра чÿхемелле.

● **Псориаз.** Вётетнё 5 çулça вёренё 1 стакан шыва термоса 2 сехетлёхе ямалла, сăрăхтармалла. Апат умён кунне 3 хут 2-шер апат кашăкё ёçмелле.

● **Кăкăр хёртсен.** Пёр пек виçепе лавр çулçи, чечекре чухне пухнă матрÿшке курăкё илмелле. Вётетнё 1 чей кашăкё хутăша вёренё 1 стакан шыва ярса пиçёхтермелле. Кăкăр хёртсен, вар-хырăм канăççăрлантарсан ёçмелле.

● **Артрит.** Вётетнё 5 çулça вёренё 1 стакан çурă шыва ямалла, вăйсăр çулăм çинче 5 минут вёретмелле. Ун хыççăн шёвеке çулçипех термоса ямалла, 4-5 сехет пиçёхтермелле. Сăрăхтармалла, яра куна сыпкăмăн-сыпкăмăн ёçсе ямалла. 3 кун çапла ёçмелле. 1 эрне тăхтав тунă хыççăн каллех сипленмелле. Сиплев кунёсенче вегетариан диетипе пурăнмалла.

● Лавр çулçин çăвёпе часах ÿт илеймен сурансене те сиплеççё.

Антонина СЕРГЕЕВА хатёрленё.

Премьера хыççăн

«Сутăн илнё чыс» тавра

Иртнё çул вёçёнче К.В.Иванов ячёллё Чăваш патшалăх академи драма театрён сцени çине Анатолий Хмытăн /Ефимовăн/ «Сутăн илнё чыс» пьесипе лартнă спектакль тухрё. Премьерăра çеç мар, ун хыççăн тата икё хут кăтартнă спектакльте те аншлаг пулчё. Кайран вара... «Сутăн илнё чысшăн» ахăр самана пуçланчё. Ун пирки Тимёр Акташ журналист каласа кăтартё.

Палăртса хăварар: Анатолий Хмыт çырнă «Сутăн илнё чыс» пьеса чăваш драматургёсен икё çул каялла ирттернё республика конкурсёнче иккёмёш вырăна тухнăччё.

● *Спектакльти самант.*

Редакцирен: *«Сутăн илнё чыс» пьеса мёнле çурални пирки автортан ыйтса пёлтёмёр. Тата çакна палăртса хăвармалла: илемлё литература произведенийё документ повеçё мар. Унта автор хăй «хуçа». Çавăнпа та пьеса куравçăсен пёр ушкăнне тивёçтерменни вăл пачах юрăхсăррине пёлтермест.*

Ертÿçё шухăшё

Кăçалхи кăрлачăн 23-мёшёнче Чăваш радиопа ЧР культура министрён çумё Альбина Алексеева каласрё. Культура çулталăкне халаллана передачăра радио итлевçёсен ыйтăвёсене хуравларё. Манăн вара Анатолий Хмытăн «Сутăн илнё чыс» спектакльне оппонентсем сивлени пирки министр çумё мён шухăшлани кăсăклантарчё. Альбина Ивановна çапла хуравларё: «Министерство нихăш енне те хушу пама пултараймасть. Вёсен хăйсен пёр чёлхе тупмалла».

Унтан Чăваш драма театрёнче ЧР Культура министерствин представителё валли спектаклён прогонё иртрё. Министерствăран прогона ведомствăн ертсе пыракан эксперт-специалисчё Светлана Садовникова хутшăнчё.

Ун умён çак йёркесен авторё спектакле лартнă режиссерпа, Чăваш халăх артисчёпе Иван Ивановпа тата театрăн пултарулăх ертÿçипе, СССР халăх артисчёпе Валерий Яковлевпа тёл пулса каласрё.

Кётмен хăнасем

Валерий Николаевич пёлтернё тăрăх – пьесăна Афган вăрçин ветеранёсем ырласа йышăннă. Кăшт каярах тепёр ушкăн çитнё. Йышра полковник та пулнă. Çапла пёлтернё: вёсем спектакль валли пётём билета туянма тата шăв-шав çёклеме пултараççё-мён. Афганистан вăрçинче тивёçсёррисене орден паман иккен /спектакльте вара тёп геройсенчен пёрне шăпах унашкал наградăпа тивёç çук çёртенех чыслана. – **Авт./,** кашни награда шутра тăрать.

– Кётмен хăнасене эпё пьеса документ повеçё маррине, вăл ÿнер произведенийё пулнине ăнлантартăм. Автор вăл е ку пулăм пирки хăйён пек шухăшлама пултарать, – терё В.Яковлев.

Авторпа редактор прависем пирки

Автор хăш-пёр пулăма ÿнер мелёпе илемлетме пултарать, çавăн пекех – хăй енчен шухăшласа кăларма та. Ăна мён тата мёнле çырмаллине хушма никамăн та ирёк çук. СССР Писательсен союзёнче, тепёр тесен, çапла тума хăтланнă та. Ăна çак тёллевпе 1934 çулта И.В.Сталин йёркеленё. Раççей литературовечёсен ёçёсенче палăртнă тăрăх – вăл хăй редактор тивёçёсене пурнăçланă. Çакă паллă: ВКП/б/ «генеральнăй шухăшёпе» пёр килмен произведенисен авторёсене репрессиленё.

Çав самана хыça юлнă темелле. Совет Çарён Тёп политуправленийёпе замполитсен тапхăрё те вёçленнё пекчё.

Валерий Яковлевăн шухăшёпе театр директорён тивёçёсене пурнăçласа пыракан Юрий Владимиров та, Светлана Садовникова эксперт та килёшеççё.

Актерсен вылявне – мухтав

Актерсем тёлёнмелле лайăх вылярёç. Курав залё пушă пулин те. Ахальтен мар Чăваш патшалăх драма театрё «академи» ята тивёçнё. Пурте – çÿллё шайра. СССР халăх артистки Вера Кузьминан ку спектакльте эпизод ролё – Альша Абай çеç. Унта та мёнле вăйлă сăнар калăплать вăл! Афган хёрарăмён сăнарё – хăйён тăван çёр-шывне чунран юратаканскерён, унăн тăшманёсене чăтма пултарайманскерён, ылханаканскерён.

Моджахедсен /Муххамад, Захир, Амин/ сăнарёсем тата мёнлерех! Совет фильмёсенчи тăшмансен карикатури мар вёсем. Хăйсен Тăван çёр-шывне хÿтёлекен чăн-чăн арçынсем, совет салтакёсен – «шурависен» – тăшманёсем.

Совет пропаганди пирки

Иртнё ёмёрён 80-мёш çулёсенче наркотиксен контрабанди пирки каласма-çырма юраман. Вăрçă пирки те массăллă информаци хатёрёсенче «афган халăхне – интернационал пулăшăвё» тесе палăртнă.

Пурнăç тёрёслёхё

Анатолий Хмыт тискер вăрçа тёрёс, суймасăр уçса панă. Автор Афганистан халăхне ăнланни, ăна хёрхенни туйăнать. Çавăнпа та спектакль вăхăтёнче шăна вёçни илтёнмелле шăплăх хуçаланать. Залра ларакансем унччен кунашкаллине, хăйён шухăшне çакăн пек уçса паракана чăваш авторёсен хушшинче халёччен тёл пулманччё-ха. Пурнăçа тёрёс сăнланипе çак чыса тивёçнё вăл.

Спектакль критикёсене шăпах çакă килёшмен-ши? Кунта паттăрла çёнтерÿсене мар, тусюлташсен, пиччесемпе ывăлсен çухату ыратăвне кăтартнă. Амăшён синкерё пур. Ывăлё вилни пирки илтнё хыççăн унăн пурнăçё тёревсёр юлнă.

Черетлё «юсав»

Спектакльти икё юрра кёскетнё. Пёри – салтак юрри. Ун авторё – чăваш поэчё тата публицисчё Анатолий Кибеч. Çакăн пек йёркесем пур унта: «Аташса çÿрерём, çулăм сирпётсе... Афганистан – суя тăшман...» Иккёмёшё, вырăсли, ăна пьеса авторё вăрçăра илтнё. Вăл каланă тăрăх – «Крики мусульман... Как бежали в горы басмачи...» йёркесенчен тăракан юрра хăй вăхăтёнче совет саманинчи ВИАсем те юрланă.

Прогон хыççăн театрăн ÿнер канашён ларăвё иртрё. Унта та кёрсе тухрăм.

– Ыран спектакль пулать-и?

– Пулать, – шантарса хуравларё пултарулăх ертÿçи.

Апла, театра юратакансемпе А.Хмыт пултарулăхне кăмăллакансем ахалех кулянна? Шел, спектакль малтанхи хăватне çухатнă. Пьесăран йăла драми çеç тăрса юлнă.

Куравçăсен пысăк пайё, каларăмăр ёнтё, спектакле ырласа йышăннă. Вёсеннчен пёрин шухăшёпе паллашар-ха.

Марина Анисимова:

– Эпё Йёпреç поселокёнче çуралса ÿснё, халё Шупашкарта пурăнатăп. Афган вăрçин «çимёçне» хам тутанса пăхнă. Асăннă çёр-шывăн Баглан провинцийёнчи Пули-Хумри хули çывăхёнчи çар чаçён медсестри пулнă. «Сутăн илнё чыс» спектакльри ёç-пуç чăнлăхпа килёшсе тăрать. Ăна тахçантанпах кётнё.

Спектакле критиклекене те итлесе пăхар-ха.

Анатолий Шибаев /унăн сăмахне Интернетран илтёмёр/:

– ...Кун пек çынсене /сăмах пьеса авторё пирки. – **Авт./** Афганистанра нихăçан та хисеплемен, тёпрен илсен, Совет çарёнче те. Халь ăнланатăп: хăйён «произведенийёсем» валли Афган вăрçин ячăх енёсене мёншён «пуçтарнине»... Вăрçă вараланчăксăр пулмасть... Хам ятран çеç каламастăп кăна... Çакăн пек шухăшлатăп: тахçан ку йёкёте «асаттесем» тăн кёртнё е десантниксем кÿрентернё... Çав çилле хăваласа çырать те вăл...

■ **Тимёр АКТАШ**

Автор шухăшё

Тусăмсен ячёпе лартнă палăкчё

2011 çулта, «Леш тёнчерен...» роман-дилогие пичете панă хыççăн Чăваш кёнеке издательствинче мана ырă шухăш пачёç: «Пьеса çырса пăхасшăн мар-и? Театрсен репертуарёсем хавшак, паянхи кунпа килёшсе тăракан спектакльсем çук. Шухăшласа пăхăр». Çённи яланах хăратать, хăратать те кăсăклантарать...

Ёнсене нумай хыçса çÿрерём тесе каламăп – киле çитнё çёре сюжет тёвёленчё те... Чи малтан Н.Терентьев кёнекисене туртса кăлартăм. Çук-ха тетёп, ку çеç çителёксёр, Чăваш академи драма театрне васкарăм. Унта Валерий Карповпа курса калаçрăм, вăл мана В.Н.Яковлевпа паллаштарчё. Ёç кайрё вара... Çырса пётернё çёре республикăра пьесăсен конкурсне уçрёç. Малтанах хутшăнасшăн марччё... Юлашки самантра çеç – пур вăя пуçтарса – Культура министерствине кайса патăм.

Асăннă пьесăпа мён каласшăнччё-ха? Ячё хăех – «Сутăн илнё чыс» – нумай уçса парать. Анчах та каласу кунта чыс пирки çеç пымасть. Паллах, вăл малти вырăнта. Мён хаклăрах? Ниме тăман вăрçăра çапăçса паттăррăн вилни е чыса çухатса пурнăçа упрани. Кёскен каласан – мён хаклăрах? Пурнăç-и е чыс-и? Кам хуравлё çак ыйтăва? Пёлместёп. Куракансем хăйсем хуравлачăр. Манăн Петёре хурлас килмест, анчах эпё ăна мухтамастăп та. Мёншён? Пьесăри пёр сценăна аса илер. Душмансем вёсене тыткăна илнё. Персе пăрахма хатёрленеççё. Петёр сиксе тăрать, душмансемпе килёшсе, пиччёшне Павăла персе пăрахма тесе аллине автомат тытать. «Каçар, пиччe... Эпир иксёмёр те пуç хурсан анне мёнле пурăнё...» – тет вăл. Çак сăмахсенче чăнлăх та пур. Шухăшласа пăхăр-ха! Чăн та – амăшё умне цинк икё тупăк килсе лартнă пулсан – унăн чёри епле чăтёччё-ши? Ăçта тёрёслёх? Ăçта хурав?

Юлашки сценăра пиччёшёпе шăллё харкашнă самантра ăнсăртран пăшал персе ярать, пуля амăшне лекет... Эпё кун пирки тем те илтрём... Шухăшăм: амăшне те вăрçă, вăрçă вёлерет. Петёрпе Павăл мар. Асăрхăр-ха: ывăлёсем мёне пула харкашса каяççё? Афган вăрçине пула! Кама кирлёччё çав вăрçă? Кама? Вăл никама та хёрхенмест тесшёнччё çак сценăпа...

Афган вăрçи паянхи кун та пирён чёрере! Паянхи кун та пире вăл ав тавлаштарать. Хăйёнчен хăтармасть. Афган вăрçи ветеранёсен пёр ушкăнё пьесăна питё ăшшăн кётсе илчё, тепри вара ăна тёп тума хатёр. Вёсем тёрлё çăхав çырса министерствăсем тăрăх чупса çÿреççё. Мён ку? Афган «синдромё». Вёсем, кăкăр çине çакнă орден-медаль çуттинчен тухаймасăр, пурнăç чăнлăхне курми пулнă-ши? Анчах Афганистанра вёсем çеç çапăçман-çке. Вёсем çеç пурнăç тёшшине пёлеççё имёш! Тёлёнмелле!

Пьесăна наркотик темине кёртнёшён те айăплаççё. Афганистанра çав апăрша пулман иккен! Пирён салтаксем «чарс» сăмаха та, «тарьяк» ăнлава та пёлмен-мён. Кашни подразделенире путсёр çак ялапана сăвăракан та, хутран ситрен юн тымарне яракан та пулман иккен! Афганистанра çак наркăмăша курман та имёш вёсем. Манько йышши офицерсене эпё таçтан шухăшласа кăларнă-ши? «Критиксем» историе пёлменни куç умёнчех. 1988 çулта çак пулăм пирки çёр-шыв çулталăкёпех кёрлерё. Вёсем вара ăна пёлмеççё...

Куракансем пёр шухăшлă пулмалла мар. Мёншён тесен ыйтăвё питё кăткăс, çавăнпах хуравё те пёр пек пулас çук.

Икё халăх, икё культура... Пёр-пёринпе туслă, тараватлă пурăнас вырăнне – вăрçă. Афганистан халăхё та ирёклё пурнăçа тивёçлё. Унта та пирён пек çынсемех-çке! Çавăнпах пуль Айша, Талмат тата ытти сăнар та тивёçлё пулса тухрёç... Кашни хăйне евёр тёрёс сăмахсем калать. Айша Абай сăмахёсенех илер: «Ёмёр-ёмёр аса илсе пурăнёç! Ёмёр-ёмёр!..» 25 çул çитрё Афганистанран пирён çарсене илсе тухни – манмастпăр-ха...

Шел, вилнё тусăмсен умёнче намăс мана паян. Çак пьеса вёсене асăнса лартнă хăйне евёрлё палăкчё! Анчах та...

■ **Анатолий ХМЫТ /ЕФИМОВ/**

Мёншён çапла калатпăр

Чун кăкшăм пăкки мар

Икё кинемей çуллахи кун йăмра айёнчи сулхăна вырнаçса ларнă. Пёчёк мăнукёсенчен куç вёçертмеççё, çав вăхăтрах иртсе кайнă пурнăçне аса илеççё.

– Мён кăна курмарăмăр-ши, тантăшăм, иртсе кайнă кунçулăмăрта. Пирён ачалăхра та савăнмалли пачах пулмарё, вăрçă кёрленё çулсенче тăраниччен çывăрса та, çисе те кураймарăмăр, хамăр кăмăллламалла тум-юм та тăхăнса ÿсеймерёмёр, окоп чаврăмăр, вăрман касрăмăр, çёрнё çёр улминчен пёçернё крахмал пашалăвёпе хырăма улталарăмăр. Тата мён курмалли юлчёши? – тет пёр кинемей.

– Турă мён хушнă, çавна ас тивмеллех ёнтё, шăпаран иртейместпёр, – тет тепри.

– Çапла çав, вилем тесен те вилейместён. Эпё-и? Паян вилмелле тесен те ним чухлё те кулянмастăп, пурăнса мăй таран тăрантăм, анчах вăхăт çитмесёр леш тёнче йышăнмасть. Çапла калатчёç-и-ха ун пек чухне ваттисем: «Чун кăкшăм пăкки мар, вăхăт çитмесёр туртса кăлараймăн».

Халё çак сăмах çаврăнăшне эпир «пур пулăмăн та хăйён кётнё тата татăклă вăхăчё пур, ун урлă сиксе каçаймастăн, апла тăк унччен чăтмалла, кётмелле» тенё пек ăнланатпăр.

■ **Роман ЧЕПУНОВ**

Тем те пёр

Нью-Йорк полицийён офицерё Ларри Депримо пёррехинче дежурствăра килсёр-çуртсăр çын умёне иртсе пынă, лешё çарран пулнă. Сивё çанталăк тăнă. Полицейски нумай шухăшласа тăман, çывăхри лавккара ăшă нуски, пушмак туяннă, ăна хăех арçынна тăхăнтартнă. Çак саманта темпе те кăсăкланакан турист ÿкерсе илнё. Сăн ÿкерчёке тёнчипех курнă. Журналистсем çапкаланчăк арçынна шыраса тупнă.

Депримо офицера çакнашкал пархатарлă ёçшён службăра «ÿстернё», халё вăл – детектив, кун пирки Америкăра кирек хăш полицейски те ёмётленет.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пёлтерÿ
Тел.: 28-83-70. 316-мёш пÿлёмре йышăнаççё.

Саламлатпăр

Элёк районёнчи Ураскилт ялёнче пурăнакан Любовь Тимофеевна ПЕТРОВĂНА (СТЕПАНОВĂНА) сумлă юбилей ячёпе чун-чёререн юратса хёрÿллён саламлатпăр, пархатарлă та вăрăм кун-çул, иксёлми вăй-халпа çирёп сывлăх, тулли телей, ёçре ăнăçу сунатпăр.

Тăванёсем.

Администрация Напольновского сельского поселения, почтовый адрес: 429035, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Напольное, ул. Арлашкина, д. 117а, телефон: (83543) 33-2-30, E-mail: sao-napo@porezk.cap.ru, извещает всех участников долевой собственности в соответствии с Протоколом №1 общего собрания собственников земельных долей на территории Напольновского сельского поселения от 02.08.2006 года на земельный участок 21:18:000000:87, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Напольновское сельское поселение, о выделении земельных участков, выделяемых в счет невостребованных земельных долей. Предметом согласования является местоположение и размер земельных участков, выделяемых в счет невостребованных земельных долей:
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110401:78, площадью 1460000 кв.м.;
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110401:79, площадью 1100000 кв. м;
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110101:23, площадью 260000 кв.м.;
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110101:20, площадью 340000 кв. м;
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110101:19, площадью 440000 кв.м.;
земельный участок с кадастровым номером 21:18:110101:24, площадью 120000 кв. м.
Общей площадью 3720000 кв.м. Ознакомиться с местоположением и размерами земельных участков, выделяемых в счет невостребованных земельных долей можно по адресу: 429035, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Напольное, ул. Арлашкина, д. 117а, телефон: (83543) 33-2-30. Обоснования, возражения относительно размера и местоположения земельных участков, выделяемых в счет невостребованных земельных долей, принимаются по адресу: 429035, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Напольное, ул. Арлашкина, д. 117а, телефон: (83543) 33-2-30 в течение 30 дней со дня опубликования настоящего извещения.

ОРГАНИЗАЦИЯ продает ОТРУБИ пшеничные в мешках по 25 кг. Цена 120 руб. **Тел. 74-46-00.**

ПРОДАЮ

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

17.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, железные двери. Обшивка вагонкой, пластиком, МДФ. Т. 89050281182.

53.Отруби, зерно, к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

88.Грабли от 23 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки,** фрезы, **косилки.** Низкие цены. Все новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.

90.СЕМЕНА люцерны – оптом. Т.: 89033584014, 8/83532/ 61-2-81.

КУПЛЮ

70.Дом с участком в любом состоянии. Т. 8-927-667-07-63.

872.Бычков, коров, тёлок, овец, **свиноматок.** Т. 8-927-999-37-37.

РАБОТА

27.Кладовщики, комплектовщики, грузчики. З/п 34000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

28.Водители-экспедиторы. З/п 40000 руб. Вахта. МО. Прямой работодатель. Тел. 8-927-851-20-30.

29.Охранники с удостоверением. З/п 36000 руб. Вахта. Москва. Прямой работодатель. Т. 89278512030.

92.Требуются монолитчики, каменщики в СПб. Т.89063828051.

УСЛУГИ

72.Наркология. Анонимно. С 9 до 17 час. Лиц. ЛО 2101000772 МЗСРЧР. А.: Чеб., ул. Энгельса, 2. Т. 621184. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

чăваш халăх хаçачё
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧЁ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙЁ
Федерацин çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникацисен ингерчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийёнче 2013 çулхи çу уйăхён 31-мёшёнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленё
"Хыпар" индексё – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачё" – 54804,
"Чăваш хёрарăмё" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тёп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторё М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тёп редактор çумё/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тёп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тёп редактор çумё/
С.Л.ПАВЛОВ /тёп редактор çумё/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайён редакторё/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрён пуçлăхё/
Дежурнăй редактор Ю.С.МИХАЙЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧЁ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧЁ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонёсем: 56-00-67 – директор – тёп редактор; 56-33-64 – тёп редактор çумё; 56-04-17 – тёп редактор çумё; 62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем: 28-85-01 – общество пурнăçёне политика пайё; 56-05-21 – журналист тёпчевёсен тата куçару пайё; 56-08-62 – экономика пайё; 56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вёренё пайё; 56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайё; 56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайё; 28-82-91 – корректорсем; 56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийё: 28-83-70 – рекламăпа пёлтерÿсен пайё; 56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайё
корр. пункчёсем: 8-937-398-75-33 – Хёрлё Чутай, /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йёпреç; 28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзён правленийё
Ёç кунё 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчё» АУ техника центрёнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийёнче пичетленё. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13. 56-00-23 – издательство директорё.
РЕКЛАМĂПА ПЁЛТЕРÿСЕНЕ 316-мёш пÿлёмре йышăнаççё. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечё. Калăпăшё 2 пичет листи. Рекламăпа пёлтерÿсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлё информаци материалёсем "Реклама çинчен" федераци саккунён 2 ст. килёшÿллён "Аталану çулёпе", "Ят-сум", "Ёç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççё.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 358.